24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 18 КĔÇНЕРНИКУН 298 (6013) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетариссем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСҪР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Парти организацисен çуракине хатĕрленес ĕçри задачисем

Отечественнăй вăрçă социализмлă ялхуçалăх умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар валли кунĕн-çĕрĕн хĕпăшал тата боеприпассем тăвакан заводсемпе фабрикăсене чĕртаварсем шумай кирлĕ. Хĕрлĕ Çар речĕ кунран-кун ӳссе тĕрекленсе пырать. Ана валли апат-çимĕç продукчĕсем шумай хатĕрлемелле. Парти тата совет организацийĕсем çак пысăк задачăсене пурнăçлама çĕрте колхозсене ертсе пымалла.

Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче колхозниксемпе колхозницăсене Хĕрлĕ Çарпа Хĕ[illegible] Флота ĕçлĕн те активлăн пулăшма чĕнчĕ. Тăшмана çĕнтерме пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйăрăсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа пушăш валли тырпул, аш-какай, продуктленность валли чĕртавар ытларах ӳсĕмлĕхсем парса тăни «кирлĕ», терĕ тата ун юлташ. Çулпуç чĕнсе калани Сталинскисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума колхозниксене çĕнĕ задачăсем лартрĕ. Нумай колхозсенче ĕç хăвăрт вăйлăн хăпарчĕ. Малта пыракан тухăçсем ялхуçалăх çулне вĕçлесе колхозпа совхозсен умĕнчи обязательствăсене сударствăсем патне татрĕç. Государствăпа пĕтĕмĕш çулхи обязательство шучĕпе ăна çитесрай, сĕт-çу, тырă тата ытти те аш-какай чылай шанчĕç.

Опыт çеç хушшинче большевикла ăнăçсем ме ĕçленĕ çĕрте, партипе хастарлăхпа пĕлшăннă постановленисем правительствăпа патне çитерсе тĕрĕç сене кашни çынă çĕрте яланах çынсем пурнăçласа пысăк ĕçлеççĕ, ăнăçăсăнхинфронт ыйтăвĕ пирĕн тăвасçĕ.

Пысăк çитĕнӳ Сталин ячĕпе тăЕлчĕк районĕнчи колхозсем ялхуçăпан тата «Юлташ» туса çитернĕ çăлăх ĕçĕсене тасан хăрăмсене парса Государство умĕнче, коммунистсен тăшă. Ку колхозсанăн хыççăнах сортпуçарăвĕпе, аван са вăрлăх фондне лă тырăсене тасат хывнă. парторганизацисен

Анчах та хăшпĕрĕ те ĕçе тивĕçлĕ руководительсем хăсем ялхуçалăх ĕçĕпек йĕркелемест. В сентăнна çеç ăнлансанче юлса пыни Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕр, пирса памалле ссомольски тата ытти Октябрьски, ăсенче халĕ те кĕлте кĕртхăшпĕр рай. Аван çапасси вăраха кайсе пĕтермен работниксем тĕрлĕрен сăлтавне кунти ме пăхаççĕ. Анчах аван тавсемпе вăпур молотилкăсемпе те усă çапнă çĕрте курмаççĕ. райисенчи организацисен,

Партин тастăн колхозсене ялхуçакашни коммулех вĕçлеме пулăшмалла. лăх çулне ĕçе талăкăпех туса пымалл Аван çапас кăсем пурте ĕçре пулмалла. Молот молотилкăпа çапнине пĕрле. Авăна та талăкăпех çапмалла. Ялхуçалăх алăпа улне хăвăртрах вĕçлесе, кихуçалăх суракине хатĕрлеме тытăнмалла.

Вăрçă питех те пысăк вырăн йышăнсем ĕçре ашина ĕçе çăмăллăн тума май малла. Ĕç вăйне перекетлет. Çавăнпа парать торсене тата ытти ялхуçалăх та тр сене халех юсаса лартмалла. машин Шупашкар, Хĕрлĕ Чутай районИшлей машинно-тракторнăй станцисем вĕсенч сене юсаса çитерессĕ те ӳстĕ трактор Чутай районĕнчи МТС трактор Хĕрлĕ рас плана 50 процентне çити сене ланнă. Ишлей МТС-ĕ 58 трактор нăй, трактора юсаса çитерĕ. тăм 4-ри тракторсемпе машинăсене МТС-ĕ пулсан, колхозсенчи ялхуçалăх ниисене тата инвентарьсене юсама нăй те тытăнман-ха. Çак ĕçе халех тытăнас пулать, колхозсенчи парторганизацисемпе коммунистсен çав ĕçе пуçарса пырас пулать. Машинăсен, инвентарьсен пайĕсене вăй çитнĕ таран колхозсен тимĕрçĕ лаççисенчех тума тăрăшмалла.

Тăшман пирĕн çĕршывăн хăшпĕр районĕсемпе облаçĕсене тытса илме пуларчĕ. Çак вăхăтлăх çухатăва тирĕн хамăр çĕр çинче туса илнĕ тырăпа витмелле. Парти организацийĕсем тырпул акăнмалли лаптăксемпе лайăх усă курассишĕн тата вĕсене аслăлатассишĕн, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн, çĕнĕ культурăсен, пахча-çимĕçĕн, çĕрулмин тухăçне икшер-виçшер хут ӳстересси шĕн кĕрешӳ пуçламалла. Кашни колхозрах вăрлăх фондне çителĕклĕ уйăрса хăварса тасатса хумалла.

Хĕрлĕ Çар ретне кайнă руководительсем выränне колхозсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем тăчĕç. Çитес çулхи ялхуçалăх çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илсе, ăна ăнăçлăн ирттерме çĕнĕ кадрсем татах та нумай кирлĕ. Машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлеме трактористсем, комбайнерсем, шоферсем вĕрентсе хатĕрлемелле. Вăл кадрсене халех вĕрентсе кăларасси парти организацисен ответлă ĕçĕ пулса тăрать. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен колхоз председательĕсене, бригадирсене, звеноводсене, вылăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен работниксене вĕрентсе хатĕрлекен кĕске сроклă курссем организацилес пулать. Хăшпĕр районсенче трактористкăсем хатĕрлеме тытăннă та ĕнтĕ. Тăвайри машинно-тракторнăй станцинче 27 хĕрарăм тракториста ĕçлеме вĕренеççĕ. Анчах ку вăл ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха.

Ĕç çĕнĕ кадрсене хатĕрлесси çинче çеç те мар. Çĕнĕ кадрсене ĕçре пулăшса пыни тата вĕсемпе ĕçре тивĕçлипе усă курма пĕлни кирлĕ. Парти организацисен ялхуçалăх ĕçĕнчи специалистсене ĕçре пулăшса вĕрентсе пырас пулать. Пултаруллă рабочниксемпе ответлăрах ĕçсенче усă курас пулать.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре агротехникăна анлăн тата тĕрĕс пурнăçласа пыни пысăк выränта тăрать. Партин колхозсенчи организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсене агротехникăна вĕрентессине пуçарса пымалла. Малта пыракан колхозсен вăйлă тырпул туса илнĕ опычĕсене ăнлантарса памалла. Колхозсенчи коммунистсем агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре чăн-чăн организаторсем пулма тивĕçлĕ.

Нимĕçсем Мускава хупăрласа тытса илес шутпа пуçланă иккĕмĕш генеральнăй наступленине пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар чăсĕсем çĕмĕрсе тăкрĕç. Хĕрлĕ Çаран паттăр воинсем тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе çĕмĕрсе пыни ĕçсыннисене татах та аванрах ĕçлеме хавхалантарать. Çав çĕнтерӳсем пирĕн татах та ытларах вăй хурса, çине тăрса ĕçлеме, тăшмана пур фронтсенче те аркатса тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшу парса пыма чĕнеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекенсем аван çапса пĕтерсе ялхуçалăх çулне вĕçлессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене парса татассишĕн, çитес çулхи суракине тивĕçлипе хатĕрлессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тытăнчĕç. Ĕçсыннисен массăллă производствăллă çĕкленĕвне малалла татах та вăйлăнрах сарса пымалла. Çитес çулхи суракине большевикла хатĕрленесе, 1942 çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç, Калинин тата Кăнтăр-Хĕвеланăç франчĕсенчи чылай участоксенче пирĕн войскăсем, противника хирĕç хаярăн çапăçса, малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан чылай пунктсене, вĕсем хушшинче Калинин хулине, Клинран хĕвеланăç еннерехри Высоковска, Истрăран хĕвеланăç еннерехри Ново-Петровскине, Тулăран кăнтăр-хĕвелтухăç еннерехри Воловăна йышăннă.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче нимĕçсенне 16 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

* * *

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 43 танкне, 3 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 640 автомашинине ытла, 4 полевой орудине прислугипе пĕрлех, 7 зенитнăй пулеметне, боеприпассем тиенĕ 130 лавне ытла, горючи тултарнă 2 автоцистернине пĕтерсе тăкнă. Тата сиенленĕ, тăшман пехотин икĕ полкне пĕтерсе тăкнă тата сапаласа янă.

* * *

Хĕвеланăç франчĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Белов генералăн гвардейски кавалери чăсĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче халăх пурăнакан ултă пункта йышăннă тата нимĕçсен боеприпассем тиенĕ виçĕ вагонне, 11 автоцистернине, 3 танкне, 1[illegible] орудине, 30 пулеметне, 5 минометне тата ытти трофейăсене тытса илнĕ. Рокоссовский генералăн чăсĕсем çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен 35 орудине, 24 пулеметне, 2 минометне тата 39 автомашинине тытса илнĕ.

Красноармеец Воробьев юлташ, нимĕçсен блиндажĕ патне пырса çитсе, тĕл персе тивретнипе икĕ часовоя пĕтерсе тăкнă. Блиндажран чупса тухнă нимĕçсем çине Воробьев юлташ гранатăсем ывăтнă. Çав çапăçура хăюллă красноармеец фашистсен 25 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче чакса пыракан нимĕç оккупанчĕсене тылран совет партизанĕсем атакăласçĕ. Боец-партизансем Д. тата К. юлташсем пĕр кун хушшинче засадăра ларнă çĕртен нимĕçсен 14 салтакне тата 5 офицерне персе вĕлернĕ. Н. ялĕн хĕрринче нимĕçсен каялла чакнă батальонĕн штабĕ вырнаçнă пулнă, партизансем çав штаб çинне пырса тапăнса, ăна йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Ялсовет председателĕн Ш. юлташăн партизанла отрячĕ тăшманăн зенитнăй батарейи çине хăюллăн пырса тапăннă. Чакакан чăссене хӳтĕлес шутна нимĕçсен командованийĕ Г. ялтан инçех мар вăрман çывăхĕнче 3 зенитнăй оруди вырнаçтарса лартнă. Партизансем çĕрле вăрмана кĕрсе шурă халат сем тăхăннă, çутăлас умĕн вĕсем нимĕçсен орудийĕсем патне шуса çитнĕ. Боецсен пĕр группи фашистсен вăрманти палаткисене тата шалашĕсене атакăланă. Тепĕр группи, часовойсене вĕлерсе, орудисене, боеприпассене тата вичĕ автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 29 çын вилнĕ. Нимĕç войскисем каялла чакакан çулсем çине партизансем завалсем тăваççĕ, çулсен уйăм участокĕсенче минăсем хурса тухаççĕ, кĕперсене взрыв туса сирпĕнтереççĕ. Д. ялĕ патĕнче минăсем çине пырса тăрăнса, нимĕçсен салтакĕсем ларса пыракан виçĕ грузовик сирпĕнсе кайнă.

* * *

Мускав облаçĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă ялсемпе хуласенче пурăнакансем фашистла мерзавецсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Ершово ялĕнче нимĕçсем вырăнти граждансемпе тыткăна лекнĕ красноармеецсене 100 çынна яхăн чиркĕве пухнă пулнă. Кайран вара çав чиркĕве унти çынсемпе пĕрлех взрыв туса сирпĕнтерсе янă. Истра районĕнчи Высоково ялĕнче ирсĕрсем 70 çулти Ф. К. Григорьев старике хăйĕн çуртне ан çунтарса ярăр тесе ыйтнăшăнах персе вĕлернĕ. Çав ялтах нимĕç офицерĕ икĕ ача амăшне, ывăр хĕрарăма ирĕксĕрлесе пусмăрланă. Звенигородски районри Ворощук ялĕнчен фашистсем хĕрарăмсене, вĕсен ачисене пăрахса хăварса, хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă. Подмосковье станцинче машинист помощникĕн Ладзатован пуртне нимĕç офицерĕ пырса кĕнĕ. Вăл пуртри мĕнпур сĕтел-пукансене пуртăпа вакласа тăкнă, кĕпе-тумтирсене тата хаклă япаласене хăйпе пĕрле илсе кайнă. Истра хулинчен тухса кайнă чухне фашистсем халăхăнне алла мĕн лекĕнисене пурне те—пуçтурисене, елкăна илемлетмеллисене, савăт-сапасене, кĕпе-тумтирсене илсе тухса кайнă. Хулара пурăнакансене нумайĕшне вĕсем урамрах çарамаслантарнă.

* * *

Юлашки вăхăтра нимĕç çарĕн шухăш-кăмăлĕ уйрăмах хăвăрт начарланса пырать. Тытăкăна лекнĕ гитлеровецсем фашистла Германи поражени тӳссĕсĕ синчен час-часах каласçĕ. Çак кунсенче нимĕçсен 23-мĕш пехотнăй дивизин 3-мĕш дивизионĕнчен тытăкăна лекнĕ Эдмунд Шинке салтак çапла каласа панă: «Мускав патĕнчи юлашки çăвăçусенче 67-мĕш пехотнăй полк питех те пысăк çухату тӳсрĕ. Ротăсенче 20—25-шер çынтан мала мар тăрса юлнă. Салтаксем выçăпа аптăрасçĕ, вĕсем ялсенче халăхран апат-çимĕçсем вăйпах турта-турта илеççĕ. Эпир халĕ çĕнтерĕн шанчăка çухатнă. Салтаксем пĕр-пĕрин хушшинче вăрçă усăкăр пулни çинчен ӳççăнах каласçĕ тата Гитлера ылханаççĕ».

321-мĕш пехотнăй полкăн 1-мĕш батальонĕнчен тытăкăна лекнĕ Алоид Буш салтак çапла каласа панă: «Германи çарĕнче апат-çимĕç сисĕнмеллех начарланчĕ. Салтаксем выçă лараççĕ, çавна пула вĕсем хирĕçле калаçаççĕ. Пирĕн салтаксене начар тумлантарнă. Халĕ пуçланнă сивĕсем салтаксен ахаль те начар шухăш-кăмăлĕсене татах та начарлатрĕç. Пурте мĕнле те пулсан киле каясси çинчен кăна шухăшлаççĕ».

187-мĕш пехотнăй полкăн пĕрремĕш батальонĕнчен тытăкăна лекнĕ Вильгельм Ганнке салтак çапла каласа панă: «Апат-çимĕç начар, çăкăр сахал параççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа та эпир сахăр илмен. Салтаксем çурма-выçă пурăнаççĕ. Питех те сивĕ. Манăн взводра 15 çыннăн аллисемпе урисене тăм илнĕ. Икĕ уйăха яхăн ĕнтĕ эпир мунчара пулман тата кĕпе-тумтирсене çуман. Нумай салтаксем тата офицерсем те вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăллă, мĕншĕн тесен вĕсем вăрçă Германи поражени тӳснипе пĕтесси çинчен пĕлеççĕ. Взвод командирĕ, нацист фельдфебель Энгельгардт, çак кунсенче салтаксемпе каласнă чухне çак вăрçă ăйăх таранах тăрантарчĕ, тек вĕсем вăрçашăн мар, тесе пĕлтернĕ.

Декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 17-мĕш[illegible]ран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç франчĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 14 оруди, 24 автомашина, 58 ещĕк снаряд, 6 миномет, 6 пулемет тата ытти тĕрлĕ трофейăсем шумай тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн Тула сыпче пирĕн боецсем, халăх пурăнакан К. пунктшăн çапăçса, СС «Великая Германия» полкăн 5-мĕш батальонне çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче противникăн 200 вилĕ ытла, 2 танк, 2 оруди, 48 автомашина, 3 раци тата 98 мотоцикл вырtса юлнă.

* * *

Старший лейтенант Соколов юлташăн танковăй подразделенийĕ, Ленинград фронтĕнче кĕрешекенскер, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 16 противотанковăй оруди, миномет батарейине, 5 пулемет, артиллерин 3 блиндажне орудийĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Соколов юлташ танкĕн экипажĕ 6 противотанковăй оруди пĕтерсе тăкнă тата нимĕç пехотине пĕр взвода çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн артиллеристсем тăшманăн танкне персе çĕмĕрнĕ. Фашистсен танкисчĕсем машинăран тухнă та вăрмана каялла тарса кĕрсе пытанма хăтланнă. Красноармеец-связист Помосов юлташ, тăшман артиллерийĕ вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, танк патне чупса пынă та люк ăшне сиксе кĕнĕ, унтан башнăна çавăрнă та тарма тытăннă фашистсене пулеметран тĕл персе вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Муссолини Хĕвелтухăç фронтне янă Итали салăвăсем хушшинче вăрçа хирĕç шухăш-кăмăлсем кунран-кун вăйланса пыраççĕ. Тытăкăна лекнĕ Антонио Белотти çапла каласа парать: «Итали салтакĕсем хăйсем мĕншĕн çапăçни çинчен пĕлмеççĕ. Вĕсем çак вăрçа кăмăллamaççĕ, нимĕçсене кураймаççĕ. Итальянецсем мĕнле те пулин киле хăвăртрах тавăрăнасси çинчен кăна шухăшлаççĕ». Тытăкăна лекнĕ Майер Марио çапла пĕлтерĕ: «Юлашки вăхăтра салтаксем хушшинче хăйсене хăйсем амантасси шумайланчĕ. Салтаксем хăвăртрах Италие киле тавăрăнас шутпа хăйсен аллине е урине персе амантаççĕ». Тытăкăна лекнĕ Антонио Вакетти допросра çапла каласа панă: «Виççĕмĕш полкăн 5-мĕш ротинчен темиçе салтак тарнă. Гарбели салтак хăйĕн аллине хăех персе шăтарнă. Офицерсем салтаксене газ[illegible]кăна яма тытăнсан, час-часах харкашусем пуçланаççĕ. Салтаксем хăйсем шиммĕн те çимен тата сивĕ, тесе ӳпкелешеççĕ». Тытăкăна лекнĕ Северино Фрай çапла каласа парать: «Пирĕн салтаксем çавтăри хавшаса çитнĕ... Пирĕн дивизи Сэвет çĕршывĕн чикки урлă каçнăранпа пĕтĕмпе 300 салтак ытла тарчĕç. Дезертирсенчен пĕр пайне тытнă та персе пăрахнă». Тытăкăна лекнĕ старший капрал Валентине Сальватторе тата И. Розарио салтак офицерсем салтаксенчен пискерĕн мăшкăллани çинчен каласа панă. Мĕн те пулин пĕчĕк йăнăш тунă. шăнах офицерсем салтаксене хĕнесе пĕтереççĕ.

* * *

Армяна республикинчи çĕршер колхозсем, питех те тухăçлă тĕштырă, çĕрмамăкĕ, табак тата пахча-çимĕçсем тусса илсе, государство поставкисене срокпа малтан тултарнă. Вагаршапат районĕнчи «Джафарабад» колхоз государствăна çĕрмамăкĕ памалли çултайăкри плана срокпа пĕр уйăх çурă малтан тултарса, планран ирттерсе çĕршер центнер чĕрĕ çĕрмамăкĕ панă. Çав районри ытти 15 колхоз, Октябрянски районри 20 колхоз тата ытти нумай колхозсем те государствăна çĕрмамăкĕ парас плана ытлашшипех тултарнă. Котайски районри колхозсем государствăна плансран ирттерсе вуншар центнер табак çулçи параççĕ. Республикăри колхозсем кăçалхи çул кĕрхи тырпула халиччен[illegible]нчен 30.000 гектар ытла ирттерсе акнă. Чылай районсем кĕрхи тулă акмалли плансенĕ 40—50 процент ирттерсе тултарнă. Республикăри мĕнпур колхозсемпе МТС-сенче çуракине хатĕрленес ĕç пысăк хавхаланупа пулса пырать.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Тăшман войскисене татах та тепĕр хут пырса çапни

Хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Калинин фронтĕнчи войскăсем кăçалхи декабрĕн 16-мĕшĕнче Калинин хулине йышăнса илнĕ. Калинин хули районĕнчи çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен Штраус генерал-полковникăн 9-мĕш армине питех те пысăк поражени кӳнĕ, нимĕçсен çав армине кĕрекен 86-мĕш, 110-мĕш, 129-мĕш, 161-мĕш, 162-мĕш тата 251-мĕш пехотнăй дивизийĕсене çапса çĕмĕрнĕ. Противникăн çапса çĕмĕрнĕ дивизийĕсен юлашкийĕсем хĕвеланăçнелле чанаççĕ.

Калинин хулишĕн пынă çапăçусенче генерал-лейтенант Масленников юлташăн тата генерал-майор Юшкевич юлташăн войскисем хăйсене уйрăмах палăртнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халĕ шута илеççĕ. Каялла чакса пыракан противника пирĕн войскăсем хыçран хăваласа пыраççĕ тата пĕтере-пĕтере тăнаççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Халăх пурăнакан тата 90 пункта илнĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 16-мĕш. («Правда» хаçатăн спецвоенкорĕ). Хĕрлĕ Çаран чăсĕсем, Клин хулине йышăннă хыççăн, кăнтăр-хĕвеланăç еннелле васкасах чакса пыракан тăшмана хыçран хăваласа, пĕтерсе пыраççĕ.

Малтанласа шутланă тăрăх, Клин патĕнчи çапăçусенче декабрĕн 6-мĕшпе 14-мĕш хушшинче пĕр Лелюшенко генералăн чăсĕсем кăна нимĕçсенчен çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 152 танк, 6 танкетка, 28 броневик, 182 тупа, 365 пулемет, 750 автомат, 1.234 автомобиль, 350 мотоцикл, 35.000 снаряд, 25.000 мина, 3.000.000 патрон, 524 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата ытти пурлăхсем те.

Истрăран хĕвеланăç еннерехри районта тăшман пирĕн наступлени тăвакан чăссене хаярăн хирĕç тăрать, контратакăсем тума хăтланать. Анчах кунта та, совет войскисем хĕснине пула, унăн чакса пыма тивет. Пирĕн частьсем Ново-Петровска тытса илчĕç. Можайск енче противник хăйĕн тĕп вăйĕсем чакнине хӳтĕлесе пырас тесе, арьергардра вăйлă çапăçусем туса пырать. Çав çапăçусене нимĕçсен авиацийĕ те хутшăнать.

Болдин генералăн чăсĕсем малалла ăнăçлăн куçса пыраççĕ.

Ĕнер пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем фашистла захватчиксенчен халăх пурăнакан 90 пункта тытса илнĕ. Мускава чаплă хӳтĕлекенсем, хăйсен командующийĕ арми генералĕ Г. К. Жуков тата фронтăн Военнăй Совет членĕ Н. А. Булганин панă приказа пурнăçа кĕртсе, малалла наступлени туса пыраççĕ. Ку приказ çапла калать: «Тăшмана сывлăш çавăрма памасăр, хăйне-хăй аса илме памасăр, йĕркене кĕрсе оборона организацилеме памасăр ырми-канми хăваламалла».

П. ЛИДОВ.

(«Правда», декабрĕн 17-мĕш).

Аргентинăра пурăнакан славянсен конференцийĕ Сталин юлташ патне янă салам

Буэнос-Айресран, Аргентинăра пурăнакан славянсен конференцийĕнчен Сталин юлташ ячĕпе çакăн пек телеграмма килнĕ:

— Аргентинăра пурăнакан славянсен конференцийĕ, фашизма пуçĕпех çĕнтерессине шанса тăвса, Сталина тата паттăр Хĕрлĕ Çара саламлать. (ТАСС).

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

Верховный Судри рабочисемпе служащисем СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ укçа-тенкĕпе япала лотерейине туса ирттерме ăшшăннине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Çак ирттĕнĕ кунсенче Верховный Суд коллективĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура коллектив лотерея билечĕсене хăйсен уйăхри ĕçукçин 20 процентĕнчен кая мар çырăнса илме пулчĕ. Алексеев юлташ 220 тенкĕлĕх, Павлова—200 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Дегтева юлташ 150 тенкĕ çырăнчĕ, çакă вăл уйăхри ĕçукçин 40 процентĕ пулать. Кĕске вăхăт хушшинчех Верховный Судри работниксем лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 2000 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Е. ЛЕОНТЬЕВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас тĕлĕшпе Сичĕпӳрт ялсоветĕнчи актив пример кăтартать. Декабрĕн 11-мĕшĕнче пулнă актив пухăвĕнче лотерея билечĕсене пурĕ 830 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Колхозник У. Агеев юлташ 30 тенкĕлĕх çырăнса укçине çавăнтах тӳлесе татрĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Гаврилов юлташ 100 тенкĕлĕх çырăнса 50 тенкине унтах тӳлерĕ. Çавăн пекех Хуралхари «13 лет Октября» колхоз председателĕ П. Смирнов та 50 тенкĕлĕх çырăнса укçине пĕтĕмпех тӳлерĕ. Çапла актив пухăвĕнче [illegible] билечĕсене илме çырăнисем 20[illegible]кине унтах тӳлерĕç.

В. ЮМАНКА.
В. ПАВЛОВ.

* * *

КУКЕÇ. СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ ирттерекен укçа-тенкĕпе япала лотерейине районри ĕçсыннисем пысăк çĕкленӳпе хутшăнаççĕ. Учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем лотерея билечĕсене илме 26 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Государство банкĕн районти отделенинче ĕçлекен работниксем 1118 тенкĕлĕх, МТ Станцинче ĕçлекенсем — 2.500 тенкĕлĕх, НКВД отделенинче ĕçлекенсем — 1730 тенкĕлĕх, ВКП(б) райкомĕнче ĕçлекенсем 3.534 тенкĕлĕх çырăннă.

Коммунистсемпе комсомолецсем лотерея билечĕсене çырăнса илес тĕлĕшпе пример кăтартаççĕ. Госбанкăн районти отделенинче ĕçлекен комсомолкăсем Семенова, Игнатьева тата Ермолаева юлташсем 170—190-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

МТС-ри пуçламăш парторганизацин секретарĕ Гаврилов юлташ лотерея билетне илме 130 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине те çавăн чухнех панă. Çавăн пекех МТС агрономĕ Гребенщиков юлташ та 150 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Лотерея билетсене илме килхуçи арăмĕсем те çырăнаççĕ. Упăшкипе ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнă Филиппова юлташ лотерея билетне илме 50 тенкĕ укçа патĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Районри ĕçсыннисем укçа-тенкĕпе япала лотерейине ирттерме ăшшăннине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Кашни колхозник лотерея билечĕсене çырăнса илме тăрăшать. Турай ялсоветне кĕрекен «Урожай» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 300 тенкĕлĕх çырăнчĕç. П. Иванов колхозник 30 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Ун хыççăн Н. Ярдыков, И. Ефимов тата ытти юлташсем те 20-шер тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Халĕ агитаторсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас тĕлĕшпе массăсен хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ.

Я. С.

* * *

ВĂРМАР. Ĕçсыннисем хушшинче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене çырăнса илес ĕç анлăн сарăлса пырать. Райфора ĕçлекенсем лотерея билечĕсене 2900 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Çĕнĕ Кавалти «Победа» колхоз активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарасси çинчен сӳтсе-явăрç. Пухури çынсем нумайĕшĕ лотерея билетсене илме çырăнчĕç, билетсемшĕн [illegible] тенкĕ укçа унтах тӳлерĕç.

Лотерея билечĕсене çырăнса ял[illegible]ытти колхозсемпе артельсенче [illegible] ăнăçлăн пулса пырать.

И. СТЕПАНО[illegible]

„Комсомол Чувашии“ бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

КУСЛАВККА. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума районри комсомолецсемпе çамрăксем тата ĕçсыннисем хушшинче 33.584 тенкĕ укçа пухнă.

Тĕмшер ялсоветĕнчи икĕ колхозра бронепоезда тума 148 ĕçкунĕ тата 370 тенкĕ укçа пухăннă. 68 çулхи И. Яковлев колхозник 5 ĕçкунĕ, 25 тенкĕ укçа панă. Учительница Памикова юлташ 75 тенкĕ, 5-мĕш класра вĕренекен Б. Николаев 5 ĕçкунĕ, ялсовет исполкомĕн председателĕ А. Орлова юлташ 50 тенкĕ хывнă.

Чăпламари туллимар вăтам шкулăн директорĕ Семенов, завуч Порфирьев юлташсем 150-шер тенкĕ, учительница Васильева—120 тенкĕ, вĕренекенсем: В. Семенов—13 тенкĕ, В. Осипова—6 тенкĕ панă. Шкулĕпе бронепоезд тума 911 тенкĕ пухнă.

Комбинатри рабочисем бронепоезд тума кашниех уйăхри ĕç укçин 20 процентĕнчен кая мар панă. А. Москова, М. Рольдман юлташсем 100-шер тенкĕ хывнă.

Шăнчас ялсовечĕн председателĕ Агромов юлташ бронепоезд тума 100 тенкĕ, Смолин юлташ—50 тенкĕ укçа панă.

А. СЕРГЕЕВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ЧКАЛОВСКОЕ. Декабрĕн 15-мĕш тĕлне районри комсомолецсемпе çамрăксенчен тата ĕçсыннисенчен «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 58 пин тенкĕ укçа пухăннă. Районри учительсен коллективĕ кăна бронепоезда тума 11 пин тенкĕ хывнă.

Халĕ колхозсемпе учрежденисенче укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕç ăнăçлă пырать.

Районри колхозниксемпе служащисем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене çырăнса илес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 24 пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

МИНИН.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЧĂВАШ УЛХАШРИ (Çĕмĕрле р.) туллимар вăтам шкулти учительсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума хăйсен пĕрер эрнери ĕçукçине панă. И. Ортиков юлташ 120 тенкĕ, Фомина — 90 т., Милютkин — 96 т., А. Музяков—60 тенкĕ панă. Çапла вара пурĕ 522 тенкĕ пухнă. Ку ĕçре шкул ачисем те каях юлмаççĕ. Вĕсен хушшинче 100 тенке яхăн пухăнчĕ.

М. АРЮХИН.

Севастополь çак кунсенче

Хĕвеланă Севастополь — кăвак воротниксемпе шурă бескозыркăсен хули; хула-герой, 87 çул ĕлĕкрех тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхне хŷтĕлеме çĕкленнĕ пекех, çĕнĕрен çĕкленчĕ.

Исторически бульвар. Хура-шурра курнă, курăкпа тата мăкпа витĕнсе ларнă авалхи бастионсене кĕреçе сассисем çĕнĕрен ыйăхран вăратрĕç. Ывăр та тачка пĕренесенчен краснофлотецсем çирĕп блиндажсем, пулеметсемпе минометсем лартмалли выраçсем тăваççĕ. Чуллă тăпрара вĕсем тарăн траншейăсем чаваççĕ.

Севастополĕн паллă панорами умĕпе краснофлотецсен йĕркеллĕ стройĕсем иртеççĕ. Вĕсем çирĕппĕн пусса утни мĕнпур парк тăрăх янăраса каять, марш ритмĕпе хастарлă юрă сасси илтĕнет. Иртен-çŷренсем хулана хŷтĕлекеннисене ăшшăн пăхса ăсатса яраççĕ. Малтан курганĕн тăрринчен портра тăракан карапсем курăнаççĕ. Çыран хĕррине войскăсем тухаççĕ, танксем, артиллери, боеприпассем пушатаççĕ. Çыран хĕррине анса порта тулнă тинĕс пехоти хăвăрт урамсем тăрăх саланса, оборона линине каять. Боецсем хĕçпăталланнă çĕнĕ автоматсем хĕвел çутинче йăлтăртатаççĕ. Сывлăш хула тĕлĕнче вĕçсе çŷрекен истребительсен шавĕпе тулса тăрать, вĕсем хулана шанчăклăн сыхласа вĕçсе çŷреççĕ.

Севастополь оборонин геройĕн Тотлебенăн памятникĕ патĕнче боецсем чарăнса тăнă. Вĕсем хăйсен хĕçпăвалĕсене тасатса йĕркелеççĕ. Миномет-чиксем прицелсене тĕрĕслеççĕ, тĕрлĕ расчетсем тăваççĕ. Фрунзе урамĕ тăрăх йывăр артиллери иртсе пырать, йывăр танксем кĕмсĕртетеççĕ.

Хулара магазинсем, столовăйсем, парикмахерскисем ĕçлеççĕ.

Тинĕс-Çар флочĕн çуртĕнче концертсем тăваççĕ, спектакльсем лартаççĕ.

Площадьре, Ильич памятникĕ патĕнче, радио Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене парать. Çак пĕлтерŷсене итлемешкĕн кунта яланах халăх пухăнать.

Акă, сывлăш тревогин сигналĕ илтĕнсе кайрĕ. Урамсем часах пушанса юлаççĕ. Çынсем убежищĕсене, пытанмалли темĕн чухлĕ хушăксене кĕрсе пытанаççĕ. Аякран вăйлăланса килекен зенитнăй тупăсен залпĕсем илтĕнеççĕ. Вĕсем сывхарнăçемĕн сывхарса килеççĕ те, акă, пĕтĕм хулана зенитнăй тупăсенчен пенĕ сасă хупласа илет. Тŷперен зенитнăй снарядсем хура тĕтĕм кăларса çурăлса кайни курăнать.

Нимĕçсен пикирующи бомбардировщикĕсем час-часах килекен тата йăлăхтарса çитернĕ хăнасем пулса çитрĕç. Вĕсем хулапа бухтăн çар объекчĕсем тĕлне вĕçсе пыма тăрăшаççĕ. Анчах та пирĕн зенитчиксем тŷрĕ переççĕ. Сталин юлташ ситĕнтернĕ соколсем хăвăрт та вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Тăшман çине-çинех бомбардировщиксен çĕнĕ соединенийĕсене ярса тăрать. Çĕрле вара сывлăшра йĕр хăваракан снарядсем тĕрлĕ тĕслĕ вут стена туса тăшманăн çулне пŷлсе лартаççĕ. Вуншар прожектор хăйсен çутисемпе пĕлĕте ухтарса çŷреççĕ. Куçа курăнман çавтери вăйлă алăсем йĕнĕрен çап-çутă хĕссем туртса кăларнă та, вĕсемпе урлă та пирлĕ касма пуçланăн туйăнать. Тинĕс заливĕ хăйĕн куçĕкски пек тикĕс çийĕнче пĕлĕтре мĕн пулса иртнине пурне те сăнласа парать. Сасартăк çутă пăнчă курăнса хаять. Вара пур çутă пайăркисем те çак пăнчă патне çиçĕм пек хăвăрт пырса пĕрлешеççĕ. Тăшмана тыраса тупнă. Команда парса чарнă пекех, пирĕн зениткăсемпе автоматла тупăсен сассисем лăпланаççĕ. Таçта инçетре, çĕрлехи хура тŷпере, пирĕн истребительсен сасси илтĕнме пуçлать. Вĕсем, тăшманăн хăрушăскерсем, прожекторсем çутатса тăракан тĕллев çине — тăшманăн çĕрлехи самолечĕ çине курăнмасăр вĕçсе пыраççĕ.

Кĕтмен çĕртенех тăшманăн самолечĕпе юнашар хĕрлĕ тата симĕс йĕрсем — сывлăшра йĕр хăваракан пульăсем карăнса иртеççĕ. Тепĕр секунда çеç иртет — тăшманăн самолетне çулăм çавăрса та илет. Укекен самолета куçран çухатмасăр çутă пайăркисем тинĕс çинелле анса пыраççĕ. Самолетран икĕ йăлтăркка татăк уйăрăлса юлчĕ, кусем — фашистсен летчикĕсем парашютпа сикрĕç.

Çак каçхине сывлăшри вăрçă ăнăçлă пулчĕ: тăшманăн виçĕ самолет пĕтрĕ. Пирĕн пĕр самолет та пĕтмен.

Хăшпĕр чухне тăшманăн пĕр-пĕр самолечĕн хула тĕлне вĕçсе çитме май килет. Вĕсем хăйсен бомбисене халăх пурăнакан кварталсем çине тĕллипаллисĕр пăрахаççĕ те хăвăртрах тараççĕ. Халăх дисциплинăна лайăх пăхăнса пурăннине пула тата сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланмалли правилăсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынине пула, çакăн пек хутран-ситрен вĕçсе пырса тапăннинчен çухатусем пысăках пулмаççĕ.

Тул çутăлать. Хăйсем хыççăн шурă йĕр хăваракан торпеднăй катерсем пĕрин хыççăн тепри базăран залива ишсе тухаççĕ. Вĕсем тинĕсĕн хĕвеланăçĕнчи кварталĕсене хурал службине каяççĕ. Вĕсем хыççăн сунарçă-катерсем тухаççĕ. Вĕсен задачи—нимĕçсем çĕр каçиччен залива пăрахнă минăсене тыса пĕтересси пулать. Ирхине çурт чĕтренсе илет, е мачча çинчи лампа сулланса каять пулсан, ку ĕнтĕ пирĕн паттăр краснофлотецсем заливра нимĕçсен минисене ăнăçлă пĕтерсе тăкнине хулари кашни сынах куллет. Çакă вăл, паллах, йывăр та хăрушă ĕç.

Татах хĕвеллĕ кун пуçланать. Хула ăна артиллери канонадипе кĕтсе илет. Тŷпере истребительсем вĕçсе çŷреççĕ. Тăшман пирĕн тăван Севастополе пырса кĕрейрес çук.

Кинооператор КИНСШ.

ПВХО ĕçне вĕрентеççĕ

ШАХАСАН. Шĕкĕр ялсоветне кĕркен колхозсенче колхозниксене сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес ĕç ăнăçлăн пулса пырать.

Çак ĕçе туллимар вăтам шкулти учительсене явăçтарнă. Вĕсем тăрăшнипе паянхи куна ялсоветĕнчи колхозсенче 649 çынна ПВХО ĕçне вĕрентсе кăларнă.

Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес тĕлĕшпе уйрăмăнах Яковлев, Абрамова тата Васильева инструкторсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă колхозниксене пĕтĕмĕшпех вĕрентсе кăларнă.

ПВХО ĕçне вĕрентесси Ямаш, Вăрман Енĕш ялсоветĕсенче те ăнăçлăн пулса пырать. Вăрман Енĕш ялсоветĕнчи колхозниксене çак ĕçе пурне те вĕрентсе кăларнă ĕнтĕ. **В. Я.**

Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртсе пыратпăр

Обороннăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Москав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче калланă сăмах ĕçсыннисем хушшинче çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ. Сталин юлташ нимĕç захватчикĕсене пурне те пĕтерсе тăкмалли майсене тĕплĕн кăтартса пачĕ, ĕçсыннисем умне практикăллă задачăсем кăларса тăратрĕ.

«...Пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйăпрĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыва валли тырпул, ашкакай, промышленность валли чĕртăвар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ»,—терĕ Сталин юлташ. Çакна Шĕнер (Çĕрпŷ р.) ялсоветĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем лайăх ăнланса илнĕ. Вĕсем фронта пулăшассине кунран-кун вăйлатса пыраççĕ.

«Глиссер» колхозри 65 çулти колхозница И. Николаева юлташ юратнă ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнишĕн савăнать. Сталин юлташ докладне ăнлантарса панă хыççăн вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр мăшăр çăм носки, пĕр тир, сăмса тутри, пĕр чăх пачĕ.

Çавăн пекех 67 çулти Мария Григорьева Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çăматă тума 1200 грамм çăм, пĕр тир, тепĕр мăшăр алса пачĕ.

«Балтиец» колхоз государствăна укса-тенкĕ, сĕт-çу, аш-какай, тырпул парса татнă. Колхоз 1942 çулăн 398 килограмм аш-какай панă. Оборона фондне пĕр сысна, 376 тенкĕ укса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тума 7 килограмм ытларах çăм, 12 тир т. ыт. те панă.

«Глиссер» колхоз та оборона фондне заем облигацийĕсене 9840 тенкĕлĕх, 571 тенкĕ укса, 9 центнер ытларах тĕштырă, 10 чăх тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 32 тир, 5 килограмм çăм панă.

Ялсоветри колхозниксемпе служащисем çĕршыв оборонин фондне заем облигацийĕсене 15.515 тенкĕлĕх, виçĕ пин тенкĕ укса, 13 центнер тĕштырă, пĕр центнера яхăн аш-какай, боецсем валли ăшă тумтирсем тума 24 килограмм ытларах çăм, 79 тир, 14 мăшăр перчатка, 10 мулаххай, ваткăран çĕленĕ 6 брюки, 21 алшăлли т. ыт. те панă.

Колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă. Ялсовет укса-тенкĕ пухмалли тăваттăмĕш кварталти плана ноябрь уйăхĕнчех пурнăçланă.

А. АНДРЕЕВ.
Шĕнер ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Сортировкăсемпе пĕлсе ĕçлес пулать

Пысăк пахалăхлă вăрлăх çитес çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçе татса парать. Çавăнпа ĕнтĕ малта пысракан колхозсем вăрлăхсене сортласа тасатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Иртнĕ çулта республикăри хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене сортласа тасатас тĕлĕшпе питех те кая юлчĕç, çитменнине тата вăрлăхсене начар пахалăхпа сортласа тасатрĕç. Сăмахран, Чкаловски районри Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ çулта сĕлĕ вăрлăхне 3—4 хутчен сортласа тасатнă, анчах вăрлăх лабораторинче тĕрĕслесен çав вăрлăх акма юрăхсăр пулни палăрнă.

Çакă вăл колхозсем кăна мар, агрономсем те, вăрлăх лабораторисенче ĕçлекенсем те вăрлăхсене сортласа тасатмалли машинăсем юсавлă пулнине тĕрĕслеменнинчен килнĕ. Агрономсем сортласа тасатмалли машинăсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслемелле, вĕсен çитменлĕхсем пулсан, сийĕнчех тŷрлетмелле.

Ĕçлеме тытăнас умĕн малтан машинăсене тасамарлăкран, тусанран тасатас пулать. Машинăсен пайĕсем юсавлă пулнине те тĕрĕслесе тухмалла. Машинăсен алисем уйрăмах лайăх ĕçлемелле, мĕншĕн тесен вăрлăхсене пысăк пахалăхлă тата таса тăвасси вĕсенчен килет. Сортировкăна тŷрем вырăна майлаштарса лартмалла, унăн вырăнтан сикклеммелле мар. Сортировкăна тырра мĕнле ярса тăни те пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та вăрлăха пĕлсе ярса тăрас пулать. Машинăн авринче те пĕр пек çавăрса тăмалла.

Агроном Т. НИКИТИН.

Çĕрулмисене пăхса усрасси

Кĕркунне сивĕсем иртерех пулни çĕрулмисене кăларса кĕме кăштах чăрмантарчĕ, вĕсене пăхса усрас ĕçе йывăрлатрĕ. Апла пулсан та, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи нумай колхозсем çĕрулмисене сивĕсем пуçланиччен кăларса пустарса кĕртес тĕлĕшпе кая юлчĕç. Çакăн пек колхозсенче çĕрулмисен пĕр пайĕ шăннă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи мĕнпур колсем те çĕрулми вăрлăхĕн фончĕсене туса ситернĕ. Çак иртнĕ кунсенче ялхуçалăх специалисчĕсен вăййĕпе колхозсенче çĕрулмисене мĕнле пăхса усранине тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслŷ çахна кăтартса пачĕ: çĕрулмисене сивĕсем пуçланиччен пустарса кĕнĕ тата хĕл вăхăтĕнче пăхса усрама подвалсемпе нŷхрепсене типĕ те таса çĕрулмисем хунă колхозсенче çĕрулмисем лайăх сыхланса выртаççĕ. Сăмахран, «Пятилетка» колхозра страховой фонда 755 центнер çĕрулми хывнă. Çĕрулмисене подвалсемпе нŷхрепсене хывнă чухне тĕплĕн тĕрĕсленĕ, тĕрлĕрен чирсемпе чирленĕ тата касăлнă çĕрулмисене йăлтах уйăрса илнĕ. Çапла тунипе халĕ çĕрулмисем питех те аван сыхланса выртаççĕ. «Трактор», «Память Ленина», «За урожай» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче те çĕрулмисене аван пăхса усраççĕ. Асăннă колхозсенче çĕрулмисене сăнасах тăраççĕ. Çĕрулми усракан подвалсемпе нŷхрепсенче ялăнах пĕр пек температура, 1—3 градус ăшă тăрать.

Çĕрулмине кая юлса пустарса кĕнĕ тата çаплипех подвалсемпе нŷхрепсене хывнă колхозсенче çĕрулмисем начар сыхланса выртаççĕ, пăсăлаççĕ. «Красные Четаи» колхозра 300 центнер ытла пăсăлса шĕтнĕ. «Чăваш Коммуни», «Красный партизан» колхозсенче те çĕрулми çĕрнĕ тĕслĕхсем пулнă. Халĕ колхозсенче çĕрме пуçланă çĕрулмисене суйласа илеççĕ.

Г. ИВАНОВ.

Çуракине хатĕрленме тытăнчĕç

ШАХАСАН. Вăрман Енĕш ялсоветне кĕркен колхозсенче Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас ĕç аван пулса пырать. В. Петров, Ф. Титов, И. Чернов агитаторсем бригадăсенче, клубсенче тата колхозниксен хилĕсене кайса Сталин юлташ лартнă задачăсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Сталин юлташăн çĕнтерŷ тумăн чĕнекен докладчĕпе сăмахĕ колхозниксене тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем татах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç.

«Свобода» колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçларĕ. Колхоз кăçал пысăк тупăмлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем халĕ çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Бригадăсем ялхуçалăх машинисене, инвентарьсене юсама пуçăнчĕç. Колхоз çитес çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илме хатĕрленет. 100 гектар ыраш калчи çине юр тытнă, уя тислĕк кăларса купан-купан туса хураççĕ, колхозниксем кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухаççĕ.

Çавăн пекех «Звезда» колхоз та çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. 36 гектар çинче юр тытса купалантарнă. Авăспŷрт Кипечри «Березовка», Высоковка ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем те уйра юр тытса купалантарма тытăннă.

Вăйлă тырпул туса илесси çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ирттернинчен тата агротехникăна тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынинчен килет. Агротехникăн хĕл вăхăтĕнче тумалли ĕçсене малта пыракан колхозсем пурнăçлама тытăнчĕç. Малта пыракан колхозсен примерĕпе районри пур колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатсах пымалла.

В. ЯКОВЛЕВ.

Тракторсене вăхăтра юсамалла

СĔНТĔРВĂРРИ. МТС 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарай-марĕ. Çакă вăл иртнĕ çулта тракторсемпе комбайнсене кая юлса тата начар пахалăхпа юсаннинчен килнĕ. Шутпала, машинно-тракторнăй станцин иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхсене кăçал шута илмелле пек. Анчах тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе кăçал та начар организацилеççĕ. Юсамалли 22 трактортан 4 трактор кăна юсанă. Тракторсене çакăн пек начар хăвăртлăхпа юсани МТС хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыманнинчен килет. МТС директорĕ Ельмаков юлташ тракторсене кĕске срокра юсаса пĕтересситĕн сахал тăрăмать. Ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăнах тракторсене юсама тытăнма май пулнă. Анчах кая юлса пуçăннă. Тракторсене юсанă çĕрте 25 çын ĕçлемелле пулсан, халĕ 14 çын кăна ĕçлет. Тракторсене юсакансем хушшинче ĕç дисциплини начар. Бригадир Разумов ноябрĕн 29-мĕшĕ-киле кайнă та декабрĕн 11-мĕшĕнче тин ĕçе килнĕ. Çапла вăл 9 кун-нче ши прогул тунă.

Лайăх ĕçлекенсем çук мар, пур. Анчах вĕсен паха ĕçĕсене сарăлсем, рăшмаççĕ. Акă, Яковлев бригада-мĕш номерлĕ трактора 14 кун-шинче юсаса кăларас вырăнне 23 кун хушшинче юсаса кăларнă. 7 кун

МТС-ăн кăçал çĕнĕрен тракторпа тата комбайнпа 38 çынна рентмелле. Курса организацлеме вĕтăннă, 20 çын заявлени пулеме тытăкалас пулать, курсра вă. Анчах валли общежити хатĕрленĕренекенсем çитмеççĕ. ен, учебник-

П. КРЫСИН.

Малта пыракансем пек ĕçлер

СОВЕТСКОЕ. Районри финанс работникĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ докладне сŷтсе-явнă хыççăн чылаях пысăк ĕçĕмсем турĕç. Малтанхи вăхăтра район укса-тенкĕ пухассипе юлса пынă пулсан, халĕ, социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пынă май, малти рете тухма пуçларĕ.

Нумай ялсоветсем тăваттăмĕш кварталпăн укса-тенкĕ пухмалли плана ытлашшипех тултарчĕç. Турай ялсоветчĕ тăваттăмĕш квартал планне 113 процент тултарчĕ. Ку ĕçре ялсовет председателĕ Смирновпа налог агенчĕ Михайлов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем укса-тенкĕ пухас ĕç тавра ялти пĕтĕм актива явăçтарнă, массăпа тачăн сыхăнса ĕçлесе, политикăллă агитаци ĕçне ырми-канми туса пыраççĕ.

Çакăн пек ялсоветсем сахал мар. Этмен, Кив Тинкеш, Тури Ачак ялсоветчĕсем те тăваттăмĕш кварталра укса-тенкĕ пухмалли плана 100 процентран ирттерсе тултарчĕç. Николаевски, Хурамал ялсовет председателĕсемпе налог агенчĕсем укса-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

Финанс работни-номоченнăйĕсем Вĕсемпе заем уполномоченнăйĕсем (тăваттăмĕш çулти ĕçĕмĕш Пятилетка çине пухас тĕлĕш кăларăм) Заем уктуса ирттерчĕç. е те пысăк ĕçсем колхозра заем укХалĕ районри 67 татнă. Паянхи куне пĕтĕмпех тŷлесе совет тăрăх пухаем укçине 12 ялшутран Этмен, Мăн ситернĕ. Çав Лапракасси, Çухра, Чуăш, Мăн Ямаш, вечĕсем пысăк çĕкленŷпе нкасси ялсо-

Анчах, хăшпĕр ялсовет-ĕçлерĕç.
кĕ пухас ĕçе тивĕçлипе-ем укса-тенкĕ Александровски ялсоветчĕ тытăнман. Тăваттăмĕш квартал пла-олса пырать. цент кăна тултарнă. Ял-нне 74 продателĕ Никоновпа налог-овет председов юлташсем укса-тенкĕ агенчĕ Осиялти актива явăçтарман. пухас ĕçе Шĕмшеш, Кильтĕш ялсоветĕ-авнашкалах ça-тенкĕ пухмалли плана-ем те укман-ха. тултарай-

Асăннă ялсоветсем заем-укçине те пухса ситермен. Кая юлса п-ыракан ялсоветсен малта пыракансен-паха опычĕсемпе усă курса ĕçлени к-рлĕ.

Я. СИ-АЕВ.

Нимĕçсен 39-мĕш армейски корпусне аркатса тăкни

Тихвин хулин районĕ пĕр уйăх каярахах ĕнтĕ, нимĕçсен командованийĕ кунта Шмидт генералăн 39-мĕш армейски корпусне илсе килнĕ хыççăн, хаяр çапăçусен уйхирĕ пулса тăчĕ. Тихвин патĕнчи группировка нимĕçсемшĕн питĕ пысăк шанчăк пулнă, Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра çак группировкăн уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăмалла пулнă. Тихвин хулине нимĕç командованийĕ стратегиллĕ чи паха пункт вырăнне шутланă. Çапла шутланипе вăл, паллах, йăнăш туман. Ку хула Ленинградпа Мускава çыхăнтаракан пысăк чугунçул çинче ларать. Тихвина тытса илнипе нимĕçсем Ленинграда татах та вăйлăнрах хупăрлама пултарнă. Çавăнпа та нимĕçсем Тихвин çине наступлени тума пуçлани Ленинград фронтĕнчи Хĕрлĕ Çар чаçĕсем, тăшманăн блокадине татма тăрăмса, Ленинград патĕнче хăйсен активлăхне ŷстернипе пĕр вăхăтрах пулни ăнсăртран килсе тухнă япала мар.

Анчах та Тихвинăн пĕлтерĕшлĕ кунпах пĕтмен-ха. Нимĕçсен командованийĕ Тихвин хулине финсемпе пĕрлешмешкĕн çурçĕр еннелле малалла каймалли тĕп пункт вырăнне хунă. Кунсăр пуçне Финляндипа çарĕн лару-тăрувĕшĕн нимĕçсем самаях шикленнĕ. Финляндипа çарĕ куç умĕнчех ишĕлсе пырать. Çавăн пекех Германи-ăн СССР Союзне хирĕç вăрçа-шăн мар, вĕсен хушшинче Германине хирĕçле шухăшсем вăйланса пыраççĕ. Нимĕçсен командованийĕ çак чаçĕсем финсемпе пĕрлешни-сене хавхалантарма, Финляндин Карели фронтĕнчи çарĕн активлăхне пĕлтатма, çавăн пекех тата нимĕçсем хайсен союзникĕсене асăрхаса тăрасшăн; çак танксенчен те нумайĕшне нимĕçсем çĕр ăшне чавса лартнă, мĕншĕн тесен çав машинăсем çŷреме пултарайман.

Тихвина йышăнса илнĕ хыççăн нимĕçсем хĕвелтухăç тата çурçĕр еннелле малалла наступлени тума хăтланса пăхрĕç. Анчах та кунта пирĕн чаçсем нимĕçсене Тихвинтăн çапăçнă чухнех хытă сиен кŷни палăрчĕ. Нимĕçсем темиçе километр малалла кайма пултарчĕç, анчах пирĕн чаçсен ăнăçлă контратакисем вĕсене часах çарса лартрĕç.

Тихвинтăн пынă хаяр çапăçусенче пирĕн фронтри вăйсене çĕнĕлле йĕркелеме тата кунта çĕнĕ вăйсем илсе пыма лекрĕ, çакна тумашкăн, паллах, вăхăт кирлĕ пулчĕ. Çак вăхăтра нимĕçсем хулара çирĕпленсе ларма, чулçуртсемпе кĕскен каласан, нумай вăхăтлăх оборонăна юрăхлă япаласемпе пуринпе те усă курса, вăйлă оборона тума ĕлкĕрчĕç. Противникăн тактикăллă положенийĕ михĕ евĕрлĕ пулнă. Пирĕн командованин планĕ çак миххе анинчен çыхса лартасси пулнă. Çакна тăвас тесен, темиçе çул урлă, вăл шутрах чугунçул урлă та, каçса противникăн чакмалли çулне татса илмелле, ун патне пулăшу тата боеприпассем илсе пырассине пĕтерсе хумалла пулнă. Нимĕçсем хăйсем çŷремелли пур çулсене те питĕ вăйлăн тĕреклетнĕ. Пирĕн войскăсен пĕр группи тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, нимĕçсен оборонин линине татрĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн войскăсен тепĕр группи тăшмана хĕссе пычĕ. Ку группăн задачи — Тихвина каякан икĕ паха çула татасси, е çул пĕрлешнĕ вырăнăн çапăçу вăрăма тăсăлсан, çак çулах хуларан кăшт аяккарахран касса татасси пулнă.

Пирĕн войскăсен иккĕмĕш группи, вăйлăн пырса çапса, тăшманăн, коммуникацийĕсене часах тытса илнĕ. Ку вăхăтра тăшман кунта Наррăрай ситнĕ 61-мĕш пехотнăй дивизие илсе килнĕ. Çав дивизин задачи — пирĕн ункăна татса кĕрсе тăшманăн Тихвинри группировкипе пĕрлешесси пулнă. Анчах та вăл Тихвин патне сывхаричченех хăйĕн составĕн çурринне çухатнă. Летчик-командирсем Холзаковпа Теренко юлташсем тăшман колоннисене Тихвин патне пынă чухне çул çинчех тăтăшах штурмласа тăнă. Нимĕç салтакĕсенчен нумайĕшĕн тăм илсе янă, мĕншĕн тесен, пирĕн авиаци нимĕçсене кĕрт ăшне хăваласа кĕртнĕ те çавăнта темиçе сехет хушши тытнă.

Çапла ĕнтĕ нимĕçсен 61-мĕш пехотнăй дивизийĕ Тихвинри группировкăна пулăшу параймасăрах аркалса кайнă. Нимĕçсем вара вăрмансенче тытанса, пирĕн чаçсене сăнама калаçĕлекен çил-тăмантра усă курса, хăйсен чаçĕсене тапратаран васкасах илсе тухма тытăннă. Çапла вара фашистсен хăйсен войскисен пĕр пайне Тихвинран илсе тухса кайма май килнĕ. Нимĕçсем Тихвинран тухса кайнине пирĕн чаçсем çийĕнчех кăсăкланă та питĕ хăвăрт наступлени пуçласа янă. Арми генералĕн Мерецков юлташăн войскисем, вăйлă атакăсем туса, тăшман хула патĕнче хаярран хирĕç тăнине аркатса тăкса, декабрĕн 9-мĕшĕнче Тихвин хулине тытса илчĕç.

Противник Будогощь еннелле чакса пырать. Ана хыçран хăваласа пыни пĕр-пĕринчен уйрăм, никам та ертсе пыман отрядсене пĕтерсе пырасси пулса тăчĕ. Çак отрядсем пирĕн боецсене курсанах хăйсен хĕçпăталĕсене пăрахаççĕ те тараççĕ. Нимĕçсенчен нумайĕшĕсем хресченсенчен çаратса тухнă тумсем: кĕрĕх пиншакĕсем, ваткăллă тумтирсем, хĕрарăм кĕрĕкĕсем те тăхăнса янă. Противникăн чĕрĕ вăйĕ те, техники те питĕ нумай пĕтсе пырать. Мерецков генералăн чаçĕсем сĕрĕн-кукăн малалла наступлени туса пыраççĕ. Декабрĕн 11-мĕшĕнчи каç умĕн пирĕн боецсем нимĕçсене 30 километр аяккалла хăваласа кайнă. Халĕ пуçăнакан 5d пункта ытла ирĕке кăларнă.

Халĕ ĕнтĕ эпир нимĕçсен 39-мĕш армейски корпусне аркатса тăкнă тесе çирĕплетсех калама пултаратпăр, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн составĕнчен 20.000 çын ытларах çухатнă.

Тихвин патĕнче пулса курнă нимĕç чаçĕсем тепĕр çапăçăва юрăхлă мар. Пирĕн боецсем халь пурăнăçа кĕртсе пыракан задача—корпусăн юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасси пулать. Тихвин патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн боецсемпе командирсем питĕ çирĕпленчĕç, хăйсен боевой пĕлĕвĕсене пушлатрĕç. Войскăсен тĕрлĕ пайĕсем: авиадивизие пехота, артиллерипе пехота, танковăй подразделенисемпе пехота пĕр-пĕринпе татах та лайăхрах сыхăнса тĕрса çапăçма пуçларĕç.

Кунта артиллеристсен ĕçне уйрăмăн паттăрсем хăвармалла. Вĕсем тупăсене, çав шутрах гаубицăсене те, уçă позицисене илсе тухса, тŷрех тĕллесе тăшман çинелле пенĕ.

Пирĕн Тихвина çирĕплетсе наступленине çăкна кăтартса пачĕ: нимĕçсем оборонăра чухне хăйсене флангран пырса çапнине чăтма пултараймаççĕ. Нимĕçсем хăйсене хупăрласа илсерех питĕ хăраççĕ. Çавăрса илсе е шăтарса кĕрсе çапăçма пĕлекен ăста мастерсем тесе нимĕçсем пĕр хăйсене çеç шутласçĕ, анчах та хăйсене çавăрса илес хăрушлăхран питĕ хăраççĕ, çавăрса илес хăрушлăх хăшт та пулин палăра пуçласанах вĕсем хăйсен мухтанчăклă организацилĕхне çухатаççĕ те йĕркесĕр паникăна ŷкеççĕ. Ростов патĕнче те, Тихвин патĕнче те ĕç çакăн пек пулса иртрĕ ĕнтĕ.

Çакăнтан пирĕн акă мĕнле вывод тумаллах: нимĕçсене флангсенчен ытларах пыра-пыра çапмалла.

Пирĕн чаçсем ирĕксĕрех чакмалла пулнă чухне те, çавăн пекех оборонăра тăнă чухне те пирĕн боецсем нихăçан та хăйсен хастарлăхне çухатмаççĕ, тăшманпа хаярран тытăса çапăçма яланах хатĕр тăраççĕ. Халĕ, пирĕн чаçсем наступлени пуçласа янă кунсенче, пирĕн боецсен хастарлăхĕ камăллĕ чĕрене савăнтарать. шухăшкун хушши ĕнтĕ тăшмана çапăçăва Темиçе кусемпе хыçран хăваласа пыраççĕ, анчах кам та ывăннă тесе каламасть. Пуçне пĕр ĕмĕт: малалла, татах та малалла! Оккупантсене пĕр сын юлтмичĕç-пĕтерсе тăкмалла!

Тихвина ирĕке кăларас операцине йăнăлă пулни пирĕн политработниксен ĕçĕсенчен чылай килчĕ. Вĕсем боецсене çине тăрăх наступлени тума хавхалантарса, вĕрентсе, хăнăхтарса пычĕç, вара наступленине каймалли вăхăт ситсен, ротăсемпе взводсене кайрĕç те, командирсем пекех пĕрремĕш приказ тăрăхах, боецсене наступленине илсе кĕрсе кайрĕç. Пирĕн боецсене хăйсем Ленин хулине пулăшу пилюне йăнăлăнни хавхалантарса пычĕ. Çапăçăва пурте пĕр шухăшпа—Ленинграда çавăрса илнĕ тăшманăн блокадине татас шухăшпа кĕрсе кайрĕç.

Эпир Тихвина ирĕке кăларнипе Ленинграда тăшман хупăрласа тăнинчен ирĕке кăларас куна сывхартнăшăн хавасланатпăр. Эпир малтанхи çĕнтерŷсем çинче чарăнса тăмастпăр, эпир вĕсемпе тĕрĕс шута илес хаклатпăр, пĕтĕм тĕнче курăнман тăшмана татах та хытăрах çапмалăн çак çĕнтерŷсенчен хамăра кирлĕ уроксемпе выводсем тăватпăр. Хамăр хушăмăрти каппайчăксене йĕркене кĕртетпĕр, лăпланса ларма шутлакансене малта пыракансем пек пулма хистетпĕр. Наступленине тунă чухне мĕнпур çар коллективĕн татах та ытларах пĕтĕçсе, пĕрпĕринпе таччăнрах сыхăнса ĕçлемелле.

Совет халăхĕ хăй фашизма çĕнтерессине шанса тăрать. Противника Елец патĕнче, Тихвин патĕнче пыра-пыра çапни, нимĕçсене Мускав патĕнче аркатса тăкни çак шанчăка татах та çирĕплетет, пире çĕнĕ вăй-хават парать. Сталин юлташ тепĕлле, ĕçе пынине эпир отечественнăй вĕрçа çĕнтерŷ тунине вĕçлетпĕр.

Генерал-майор ЛЯПИН.
(«Правда», декабрĕн 15-мĕш).

Учительсем — масса хушшинчи политикăллă ĕçре

Масса хушшинчи политикăллă ĕçре учительсем яланах паллă вырăн йышăнса тăнă. Хальхи вăрçă вăхăтĕнче вĕсен ролĕ татах та пысăкланчĕ. Пĕр иккĕленмесĕрех калама пулать: районри учительсенчен нумайĕшĕ ялти политикăллă ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Ишлей районĕнче пурĕ 41 шкул. Çак шкулсенче пĕтĕмпе 230 учитель ĕçлет. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек пысăк вăя, культура фронтĕнчи çакăн пек йышлă çара, политикăллă ĕçе хутшăнтармасăр аякра тытса тăни, уйрăмах хальхи вăхăтра, пулăштăни туни кăна пулĕччĕ. Вĕсене политикăллă агитаци ĕçне активлăн хутшăнтарас пирки эпир учительсемпе сахал мар тĕл пулса калаçнă. Учительсен районри канашлăвĕсенче те çак ыйту хисеплĕ вырăнта тăнă.

Пĕтĕмĕшпе илсен, ĕç çапла тăрать: учительсене колхозсем, бригадăсем тата ытти учрежденисем сумне çирĕплетнĕ. Вĕсем унта кулленхи массăллă ĕçе туса пыраççĕ: докладсем, каласусем ирттереççĕ, çĕнĕ хыпарсем çинчен тата правительство ирттерекен мероприятисем çинчен ăнлантарса параççĕ, колхозниксене умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилеççĕ.

Вăтам тата туллимар вăтам шкулсенчи учительсен ĕçĕсене палăртмалла. Вĕсем пурте пекех агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкула илер. Кунта пурĕ 9 учитель. Вĕсем пурте агитаторсем. Пуринчен ытла Димитриева, Яковлев, Васильева, Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă колхозсенче куллен пекех пулаççĕ. Шкул директорĕ К. Тетерина юлташ, вăлах агитколлектив руководителĕ, агитаци ĕçне хăй те активлăн хутшăнать. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа колхозсенче вăл 10 доклад ытла ирттернĕ. К. Тетерина юлташ ертсе пыракан агитколлектив хăйĕн кулленхи ĕçне умра тăракан задачăсемпе тĕплĕн сыхăнтарса пырать.

Кипечкасси туллимар вăтам шкулĕнчи учительсен ĕçне те палăртмасăр хăвармалла мар. Кунта çитнĕ учителе бригадăсем сумне çирĕплетнĕ. Хăйсене çирĕплетсе панă бригадăсенче вĕсем массăллă-политикăллă ĕçе аван туса пыраççĕ. Учитель агитаторсем хăйсен кулленхи агитацине практикăллă ĕçсемпе тĕрĕс сыхăнтарса пынине çакăнтан та аван курма пулать. Кипечкасси ялсоветне кĕрекен колхозсем государствăна 1941 çулта памалли парăмсене куç вăхăта, тĕштырăçăр пуçне, пурне те парса татнă.

Чурачăкри туллимар вăтам шкулта 9 учитель ĕçлет. Вĕсем пурте агитаторсем. Учительсене кунта та колхозсем сумне çирĕплетсе тухнă. Вĕсем колхозсен итемĕсем çине кашни кунах тухса, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ. Авăн çапнă çĕрте тăрăшса ĕçлекенсене тырăн хушса тăлемелле туни çинчен те колхозниксене ăнлантарса панă. Çакăн çинчен ăнлантарни вара колхозсенче авăн çапассине чылай лайăхлатрĕ. Нумай колхозниксем, нормăна ытлашшипех тултарса, кунне 2—3-шер килограмм таран тырă илнĕ.

Чурачăкра шкул директорĕ пулса Г. Александров юлташ ĕçлет. Çав вăхăтрах вăл агитколлектива та ертсе пырать.

Агитколлектив час-часах политикăллă докладсем туса ирттерет. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа кашни колхозрах сахалтан та 5-шер доклад туса ирттернĕ. Александров юлташ хăй кăна 13 доклад туса панă.

Масса хушшинчи политикăллă ĕçе Ишекри вăтам шкулти учительсем те активлăн хутшăнаççĕ. Учительсене ялсем сумне çирĕплетнĕ. Кулленхи ăнлантару ĕçне туса пыннипе пĕрлех вĕсем унта, ялсовечĕ тата пуçламĕш парторганизаци панă порученисем тăрăх, ытти ĕçсене те организацилеççĕ. Данилов учителе, сăмахран, Кипеккасси ялĕ сумне çирĕплетнĕ. Вăл унта пурĕ 10 доклад ытла туса панă. Шкул директорĕ Г. Лазарев юлташ агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлет. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа вăл хăй кăна 13 доклад туса ирттернĕ. Колхозниксем хушшинче политикăллă докладсем ирттерес ĕçе вăл ытти учительсене те анлăн явăçтарать. Пурне те пĕрле илсе шутласан, агитколлектив пĕтĕмпе 40 доклада яхăн ирттернĕ.

Çĕньял-Покровскинчи, Хыркассинчи, Мăмăшри, Хăймалакассинчи туллимар вăтам шкулсенчи учительсем пурте пекех агитатор пулса ĕçлеççĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем сахал ялсовечĕсенчи учительсен, сăмахран, Янăшри, Шурчари тата Тăрăнти туллимар вăтам шкулсенчи учительсен ĕçне палăртмалла. Çак шкулсен директорĕсемпе учительсем чăн та ĕнтĕ пĕтĕм массăллă ĕçе хăйсем туса пыраççĕ.

Сталин юлташăн докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе учительсем туса ирттернĕ пархатарлă ĕç çинчен шарламасăр иртсе кайма çук. Колхозсенче пулнă пухусенчен çурринче ытла учительсен вăйĕпе туса ирттернĕ.

Анчах та пур шкулсенчи учительсем те мар-ха çакăн пек активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Политикăллă агитаци ĕçне хăйсен ĕçĕ вырăнне хурса шутламан учительсем те пур-ха пирĕн. Вĕсенчен хăшпĕрисем агитмассăллă ĕçсенчен мĕнле те пулин пăрăнса юлма кăна тăрăшаççĕ.

Маналти туллимар вăтам шкулта Охтерова учительница ĕçлет. Вăл колхозниксем хушшинче мар, актив канашлăвĕсене те тухса курмасть. Çарнашкалах Васликассинчи пуçламĕш шкулти Надеждина учительница та общественнăллă ĕçе пачах хутшăнмасть.

Салабайкассинчи пуçламĕш шкулти Кирьянова учительницăна Сталин юлташăн докладне ăнлантарса пама хушнă. Анчах, колхозниксем пухăннă пулин те, Кирьянова çав пухăва пыман. Колхозниксен вара ахалех саланмалла пулнă. Паллах ĕнтĕ, ун пек сӳрĕк учительсем пĕр çаксем кăна мар, татах пур, анчах та вĕсем сахал.

Тӳрех калас пулать, учительсен политикăллă активлăхĕ кăçал чылай ӳсрĕ. Политикăллă ĕçе учительсен пĕтĕм массине активлăн хутшăнтарас тесен татах нумай ĕçлемелле-ха пирĕн.

Р. МАЛЮТИН.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Пионерсемпе комсомолецсен отлично çеç вĕренмелле

Пионерсемпе комсомолецсем нумайĕшĕ халĕ, сĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра, ашшĕсемпе пиччĕсисем тăшмана хирĕç паттăрлăн кĕрешнĕ чухне, начар вĕренни килĕшӳсĕр пулнине аван пĕлеççĕ. Çавăнпа вĕсем «хорошо» тата «отлично» паллăсем çеç илме тăрăшаççĕ. Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ шкулти комсомол комитечĕн членĕ Наталия Кроль отлично вĕренет. Галя Александрова, Ляля Иванова, Лилия Григорьева пионеркăсем те унтан юлмаççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене отлично вĕренме панă сăмаха чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Иккĕмĕш номерлĕ шкулти Маргарита Фадеева, Тамара Москвина, Юрий Игнатьев, Владя Талдыкин, Женя Фомина пионерсем пур предметсемпе те отлично вĕренеççĕ. Вĕсем хăйсенчен аслăраххисем хушшине яланах итлеççĕ. Наталия Бочарова отлично вĕренет, çав вăхăтрах отряд вожатăйĕ пулса ĕçлет. Пионерсемпе кашни кунах каласусем туса ирттерет.

Анчах шкулсенче уроксене сиктерсе сӳрекен, хиле парса янă заданисене пурнăçласа пыман е тата шкула сӳреме пăрахакан ачасем те тĕл пулаççĕха. Шупашкарти иккĕмĕш номерлĕ шкулта Коля Ткачевпа Лева Хлебников 9 предметпа «плохо», пĕрремĕш номерлĕ шкулти Нуйкин, Вася Пысин, Витя Топоренко, Витя Смирнов вĕренекенсен 5-шер «плохо» пур. Çак ачасем лайăх вĕренме пултараççĕ, анчах уроксене хатĕрленсе пымен, час-часах шкула хун сиктерсе сӳренĕ пирки «плохо» паллăсем илеççĕ.

Пионерсемпе комсомолецсен çакне астумалла: паян эсĕ вĕренекен, ыран—боец пулмалла, танксемпе, самолетсемпе ĕçлеме пĕлмелле. Çавăнпа халĕ санăн физика, хими, математика т. ыт. наукăсен никĕсĕсене вĕренсе алла çавăрса илмелле. Инженер, техник е строитель пулса ĕçлес пулсан та пĕлӳ кирлĕ. Çавăнпа май пур чухне хаклă вăхăта сая ямалла мар, каханлансе вĕренме юрамасть. Кирек мĕнле пулсан та, кашни урока тĕплĕн хатĕрленсе пымалла. Уроксене хатĕрленме çеç мар, пысăккисене пулăшма та вăхăт тупма пĕлмелле.

А. АЛЕКСЕЕВ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн инструкторĕ.

ПВХО значокĕн нормисене параççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăраш-Туçари туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем хушшинче ПВХО нормине парас ĕç анлăн сарăлса пырать. Шкулта 200 ачана яхăн ПВХО значок нормисене панă. Кунсăр пуçне шкулта ГСО, БГТО значок нормисене пама хатĕрленеççĕ.

Ф. НИК.

* * *

КУКЕÇ. Платкари пуçламĕш шкулти ачасем ПВХО ĕçне вĕренме хĕрӳллĕн тытăнчĕç. Занятисене учительсем ирттереççĕ. Халь пĕтĕмпе 4 заняти пулнă. Вĕренекенсем сывлăшран килсе тапăнăнчен тата химилле тапăнуран сыхланма, сураннăнă сăнка малтанхи пулăшу пама вĕренсе çитнĕ.

Н. МЫШКИН.

Курсран вĕренсе тухрĕç

ÇЕМĔРЛЕ. Çак кунсенче медсестрасен курсĕнчен 18 çын вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен 16-шĕ «отлично», иккĕшĕ «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пĕтерчĕç.

М. А.

Коммунистка ертсе пыракан колхоз

Ытти колхозсем хĕрсе çураки тунă. Анчах Самуккассинчи (Шупашкар р.) Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ĕçсем йĕркеллĕ пулса пыман, колхоз председателĕ ĕç çине ал сулнă, ĕçсе ӳсĕрĕлсе сӳренĕ. Çав вăхăтра колхозниксемпе колхозницăсем малтанхи председателе ĕçрен кăларса, ун вырăнне колхоз председателĕ пулса ĕçлеме коммунистка Е. Петрова юлташа суйларĕç.

Петрова юлташ малтан нумай вăхăт хушши Иккасси ялповăн председателĕ пулса ĕçленĕ. Ялпо районра малта пыракан ялпосенчен пĕри пулнă. Колхоз председателĕ пулса ĕçлеме суйласан, Петрова юлташ актива пухса колхозри ĕçе тĕрĕс организацилес тата ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе калаçу ирттернĕ. Партипе правительство колхоз стройне çирĕплетес тĕлĕшпе кăларнă законсем тата ялхуçалăх артелĕн уставĕ çинчен колхозниксене ăнлантарса панă. Колхозăн ĕç дисциплинине тата унăн пурлăхне ăнăхтарма пăхакан çынсем çинчен колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Çапла вара колхозра ĕç дисциплинни кунран-кунах çирĕпленсе пычĕ. 1941 çулти çуракине те ытти колхозсемпе пĕр вăхăтрах вĕсленĕ.

Колхозсен уйăрĕсенче хĕрӳ ĕç пынă вăхăтра пирĕн çĕршыв çине нимĕç фашисчĕсен йытăтĕвĕсем ултавлăн килсе тапăнчĕç. Тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çарпа, Хĕрлĕ Флотпа пĕрле пĕтĕм халăх çĕкленчĕ. Колхозсенчи чылайăх çынсем, вăйпитти çынсем Хĕрлĕ Çар ретне тăшмана хирĕç çапăсма кайрĕç.

— Аптрамастпăр, арçынсем тăшманпа çапăçчăр, эпир, хĕрарăмсем, колхозра тăрăшса ĕçленипе вĕсене пулăша пырар,—терĕ Петрова юлташ. Фронта кайнă арçынсем вырăнне хĕрарăмсем йышăнчĕç. Ф. Илларионова тата З. Иванова колхозницăсем уйăç бригадисене ертсе пыма тытăнчĕç. М. Пушаевăна вылăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ пулса ĕçлеме суйларĕç, А. Осипова колхоз кладовщикĕ пулса ĕçлет. Хĕрарăмсем хастарлăн ĕçлеççĕ.

Колхоз уйăрĕнче тырпул вăйлă çитĕнчĕ. Анчах ăна уйран пуçтарса кĕресси вăрăма кайма пуçларĕ. Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем ĕçсене вăхăтра туса пыма колхозниксене мобилизацилерĕç, пур ĕçре те хăйсем пример кăтартса пычĕç. Уйри тырпула йĕркеллĕн пуçтарса кĕртрĕç, аван çапма тытăнчĕç.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташăн докладĕпе сăмахĕ пичетленсе тухнă хаçата алла илсенех, Петрова юлташ халăхсен çулпуçĕ колхозсем тата колхозниксем умне лартнă задачăсем çинчен ăнлантарса панă.

— Тăшмана хăвăртрах çĕнтерес тесен, пирĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай ытларах та ытларах парса тăмалла. Халĕ пирĕн ялхуçалăх ĕçĕсене çак кунсенчех вĕçлессишĕн, фронта пулăшассине вăйлатассишĕн кĕрешмелле,—терĕ Петрова юлташ. Сталин юлташ лартнă задачăсене колхозниксем тĕплĕн ăнланса илчĕç. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн тепĕр кунтех колхозниксем пурте пĕр харăс ĕçе тухрĕç. 65 çулхи Е. Илларионов колхозник тул çутăлинченех кĕлте турттарма тухса кайнă. Вăл кунне 10—12-шер лав кĕлте турттарчĕ. Лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăна юсаса, итем çине вырнаçтарчĕç. Молотилкăпа та, алăпа та аван çапма тытăнчĕç. Çак ĕçре И. Миронов, Ф. Васильева, М. Степанова юлташсем хастарлăн ĕçлерĕç. Çапла тăрăшса ĕçлекипе колхоз ноябрĕн 30-мĕшĕнче аван çалса пĕтерчĕ.

Сталинла Конституцине йышăнăранпа 5 çул тултарнă куна колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе, государствăпа умĕнчи обязательствăсене тултарнипе паллă турĕ. Колхоз 1942 çулăн государствăна 300 килограмм ашкакай пачĕ.

Коммунистсем колхоз производствинче хăйсем хастарлăн ĕçлесе ытти сене хăвăлантарса пыраççĕ. Петрова юлташ 56 çула çитнĕ ĕнтĕ, анчах вăл çамрăк çын хастарлăхĕпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Çавăн пекех Ф. Илларионова коммунистка та ĕçе яланах тĕплĕн туса пырать.

Халăх хушшинче политикăллă-массăллă ăнлантару ĕçне куллен туса пыраççĕ. Çак ĕçе комсомолецсене тата çамрăксене те явăçтарнă.

Хальхи вăхăтра колхоз тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама тата çитес çулхи çуракине хатĕрленет.

Т. ЛОГИНОВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче

Страховой фондсем тăваççĕ

Районри малта пыракан колхозсем страховой фондсем тума тытăнчĕç. «Память Ленина» колхоз пур культурăсем тăрăх та страховой фондсене туса çитерчĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз тĕштырăсемпе пăрça йышши культурăсене 558 центнер, 541 центнер сĕрулми тата 14 центнер кантăр вăрри уйăрса фонд турĕ. «Труженик», «Красный партизан», «Новый путь», «Жнейка» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем те фондсем туса çитерчĕç.

Фондсене уйăрнă вăрлăхсене малтан лайăх тасатнă тата юсанă складсемпе амбарсенче усраççĕ.

Махорка параççĕ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем чылай çулсем хушши ĕнтĕ махорка лартса тăваççĕ. Колхозсем махорка пысăк тухăçлă тата пысăк тупăш паракан культура пулса тăнине аван пĕлсе тăраççĕ. Иртнĕ çулта районри колхозсем преми-надбавка шучĕпе кăна 18 пин тенкĕ укçа илчĕç. «Коминтерн» тата «Пятилетка» колхозсем 5-шер пин тенкĕ таран илнĕ.

Асăннă колхозсем кăçал вăтам шутпа гектартан 20-шер центнер махорка пуçтарса илчĕç.

Халĕ колхозсем государствăна махорка параççĕ. «Коминтерн» колхоз государствăна махорка памалли планна 150 процент, «Трактор» колхоз—91 процент тултарнă.

Пахча-çимĕçсем типĕтеççĕ

Колхозсем Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра нумай колхозсем пахча-çимĕçсем типĕтеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра пахча-çимĕçсем турамалли станок тунă. Çак колхоз государствăна пахча-çимĕçсем типĕтсе пама хăй çине илнĕ обязательствăна тултарчĕ. Пурĕ 125 килограмм купăста типĕтсе панă. «Коминтерн» колхозра пахча-çимĕçсене 100 килограмм типĕтнĕ. Халĕ чылай колхозсем çĕрулми типĕтес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Г. ИВАНОВ.

Артель вăрçă кунĕсенче

Канашри «Красный воин» промысла артелĕн коллективĕ çулпуç Сталин юлташ сăмахĕсемпе çавăнса, кунсерен паха тĕслĕхсем кăтартать. Артель çак кунсенче çулталăкри производство программине 160 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 3½ пин тенкĕлĕх продукци кăларчĕ.

Комсомолец Васильев юлташ ертсе пыракан çĕвĕ çĕлекен цех çулталăк планне 206 процент тултарнă. Çавăн пекех трикотажнăй [illegible] тата пĕветекен цехсем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çав цехсем çулталăкри плана 200 процент ытларах пурнăçланă. Артель коллективĕ çĕнĕ çулччен 7 пин тенкĕлĕх продукци кăларассишĕн кĕрешет.

Артель хăйĕн пĕтĕм çине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕ.

Артельре стахановецсемпе ударниксен шучĕ 130 çынна çитсе ӳсрĕ. Коммунист-мастер Москвина юлташ ытти сене пример кăтартать. М. Александров, А. Максимова, В. Николаева, А. Кошкина çĕвĕçсем унран кая юлмаççĕ, кулленхи нормăна 250 процент таран тултараççĕ.

Артель председателĕ коммунист Корчагин юлташ — производствăн пултарулла руководителĕ, ăна ЧАССР Верховный Совет Президиумĕ хисеплĕ грамотăпа наградăланă. Корчагин юлташ артель членĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса парать. Çавăнпа артельре ĕçлекенсем хушнă ĕçе пысăк пахалăхпа, вăхăтра пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Артельри пуçламĕш парторганизаци политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацинленĕ. Кунта кашни кунах политинформаци пулса иртет. Кунсăр пуçне Корчагин, Морозов, Зиновьев коммунистсем тĕнчери лару-тăру çинчен, совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçи çинчен час-часах докладсем туса параççĕ. Вĕсем агитаци ĕçне умра тăракан задачăсемпе, фронта ытларах пулăмлас ыйтусемпе çыхăнтараççĕ. Çавна май артель коллективĕ тăван çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçе активлăн хутшăнать. Артель членĕсем оборона фондне 10 пин тенкĕ ытла укçа тата заем облигацийĕсене 10 пин тенкĕлĕх панă. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 4.380 тенкĕ укçа пухса панă.

Артель коллективĕ Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем валли 12 мăшăр çăматă, 34 мăшăр çăм перчатка, 50 малахай, 45 фуфайка, 45 ăшă брюки, 6 мăшăр çăм носки, 19 алшăлли тата ытти япаласем те нумай пухса панă. Кунсăр пуçне боецсемпе командирсем валли 600 тенкĕлĕх парне ярса панă.

Çапла ĕçлет «Красный воин» пром. артель вăрçă кунĕсенче.

Ив. МАЛОВ.

Çамрăксем налог укçине тӳлеççĕ

Пĕччен пурăнакан тата ачасăр граждансем çине налог хурасси çинчен калларнă Указ Шурча, Чурачăк тата Мишер ялсовечĕсенче ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Шурча ялсоветĕнче налог тӳлес ĕçре ялти комсомолецсем пример кăтартаççĕ. А. Хозлеева, А. Никитина юлташсем тӳлесе татрĕç. Декабрĕн 10-мĕшĕнче, извещенисем салатнă кун, пĕр кун хушшинчех 300 тенкĕ ытла укçа пухăнă. Чурачăк тата Мишер ялсовечĕсенче те 400—500 тенкĕ пухнă.

С. ГОРЛАНОВ.

Совет патриочĕсен партизанла вăрçи

Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ районсенчи граждансене чĕнсе Сталин юлташ çапла каларĕ: «Тăшман йышăнса илнĕ районсенче партизансен отрячĕсене, юланутлă тата суран партизансен отрячĕсене тăвас пулать, тăшман çарĕн тăçĕсене хирĕç кĕреме, пур çĕрте те партизанла вăрçă чĕртсе яма, кĕперсене, çулсене сирпĕтсе аркатса тăкма, телефонпа телеграф сыхăнуне пăсма, вăрмансене, складсене, обозсене çунтарса яма диверсиллĕ группăсем тăвас пулать. Тăшман тытса илнĕ районсенче тăшманăн тата ăна пулăшаканнисемĕн пуринчĕн те тӳсме çук условисем туса хурас пулать, вĕсене кашни утăмрах йĕрлес тата пĕтерсе тăкас пулать, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене аркатса ярас пулать».

Çак чĕнӳ сăмахĕсем çав сехетрех пралук картасемпе окопсем урлă каçса, орудисен сассипе кĕрлесе тăракан фронт çийĕн вĕçсе, тăшман тылне юлнă совет патриочĕсем патне те çитрĕç. Фашистсен çарĕсем йышăнса илнĕ районсенче те тăван çĕршывăн кĕресси чĕрĕлсе кайрĕ. Çапла, Сталин юлташ тухса каланă хыççăн тепĕр кунтех, июлĕн 4-мĕшĕнчех, Совет Информаци Бюровĕ: «...тăшман тытса илнĕ совет районĕсенчен партизанла отрядсем ĕçлеме пуçланине кăтартакан хыпарсем çитме пуçларĕç» тесе пĕлтерчĕ. Ку пĕлтерӳре Совет Информаци Бюровĕ малтанхи хăюллă партизансем тăшманăн боеприпассем турттарса пыракан поездне сирпĕнтерсе яни çинчен каласа панăччĕ. Çакăн пек хăвăрт ӳçланса кайрĕ пирĕн халăхи ответственнăй вăрçă вăхăтĕнчи партизанла-геройсен — Герасим Куринăн, Василиса Кожихинăн тата ыт. те ачисен ачисем, вĕсем граждан вăрçи геройĕсен — Василий Чапаевăн, Николай Щорсăн, Сергей Лазон паттăр ывăлĕсем-хĕрĕсем.

Тăван çĕршыва чĕререн юратса тăракан совет партизанĕсем çынçиен фашистсене хирĕç кĕрешес ĕçре пĕчченех мар, вĕсене пĕтĕм совет халăхĕ тата пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар пулăшса тăраççĕ. Пирĕн партизанла движени пĕтĕм совет халăхĕсен массипеле тачăн çыхăнса тăрать, унăн движенийĕ халăх тарăхăвĕнчен, халăх çиллинчен ӳссе тухса сарăлать. Çавăнпа та пирĕн партизансем вăйлă, хăватлă. Çавăнпа та тăшмансем партизанла движение ниепле те пĕтерме е хупласа лартма пултараймаççĕ. Фашистла вăрăхурахсем партизансен кĕрешĕвне тискер террорпа хăратса чарса лартма тăрăшаççĕ. Çакăн пирки вĕсем партизанла кĕрешӳ сарăлнă вырăнсенче ватти-вĕттине пăхмасăрах вуншар, çĕршер çынна пере-пере пăрахаççĕ, ялсене çунтара-çунтара яраççĕ,—халăха юн ăшне путарма хапсăнаççĕ, çĕре вутпа ĕнтеççĕ. Анчах та чăн-чăн патриотсене нимĕнле террорпа та хăратма çук. Тăшман тылĕнчи совет халăхĕн партизанла вăрçи çаплах ӳсет, вăйланать, вăл улăм çинче вут çулăмĕ сарăлнă пек, ялтан ялсене, районран районсене хăвăрт сарăлса пырать. Килçуртсăр тăрса юлнă колхозниксем хĕçпăшал илсе вăрмансене каяççĕ, вĕсем унта тăшман иртсе çӳрекен çулсене пăсаççĕ, тăшман çарĕн отрячĕсене тапăнаççĕ. Урамсенче тăванĕсен юнĕ юхакан хула çыннисем бензин тултарнă бутылкăсемпе тăшман танкĕсене пере-пере çунтараççĕ. Çакăн пек сарăлса, çирĕпленсе пырать пирĕн совет партизанĕсен хаяр кĕрешĕвĕ. Çак кĕрешĕве çĕклесе пыракан партизансен отрячĕсем хушшинче пысăккисем те пĕчĕккисем те, у глисем те çуранисем те пур,—вĕсем пинĕпех шутланаççĕ.

Пирĕн хальхи отечественнăй вăрçăри партизансен движенийĕ икĕ вăйрăн пĕрлешсе тăрать. Пĕри вăл—вырăнти рабочисенчен, хресченсенчен тата служащисенчен тăракан отрядсем, тепри—регулярнăй Хĕрлĕ Çар чаçĕсен тăшманăн тылне юлнă отрячĕсем. Кун пек Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен тăракан отрядсем час-часах пĕтĕм районри партизан движенийĕн центрĕ пек пулса тăраççĕ, вĕсем пĕтĕм таврари партизансен ушкăнĕсене пуçтарса, çул кăтартса пыраççĕ. Тĕслĕхе илсен, çавăн пек регулярнăй чаçсенчен пĕри—майор Б. командирăн чаçĕ—çапăçусенче тăшман çарĕсен тылне тăрса юлнă. Унта вăл пит те пысăк территориллĕ вырăнта пĕтĕм таврари партизансен отрячĕсен тĕп штабĕ вырăнĕнче тăрса ĕçленĕ. Çак чаçри командирсем таврари партизан отрячĕсене боевой задачăсем, тĕрлĕрен канашсем парса тăнă, кирлĕ пулсан тата çав командирсемех партизансен отрячĕсене тăшман колонниссем çине, обозĕсем çине, складсем çине тапăнма ертсе кайнă. Тепĕр тĕслĕх. Тăшман çарĕсен тылне юлмалла пулнă генерал-лейтенант Болдин чаçĕ 45 талăк хушши тăшман тылĕнче ирттернĕ. Çак вăхăтра вăл немĕсем çине тапăнса нумай сиен кӳнĕ: икĕ полк штабне аркатнă, 26 танк, 1049 автомашина, 147 мотоцикл, артиллерин 5 батарейине пĕтерсе тăкнă тата ыт. те. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшман тылĕнче партизанла ĕçленине кăтартакан тĕслĕхсене эпир татах та нумай пĕлетпĕр. Анчах вĕсене пурне те илсе кăтартни кунта кирлех те мар.

Вырăнти халăхран (рабочисемпе колхозниксенчен) организациленнĕ партизансен отрячĕсем те хăюллăн кĕрешеççĕ: паттăрлăх тĕлĕшпе те, хăюллă ĕçсем тăвас енĕпе те вĕсем регулярнăй çар чаçĕсенчен пулнă партизанла отрядсенчен пĕртте юлмаççĕ. Çав отрядсем, вăрмансенче, шурлăхсенче, çырма-çатрасенче пытанса пурăнаканскерсем, вырăнти кашни сукмака, кашни тĕмескене, кашни лупашкана лайăх пĕлсе тăраканскерсем, тăшман çарĕн отрячĕсем çине сасартăк сиксе тухса тапăнаççĕ. Кĕтмен çĕртен тапăнса тăшман çарĕн лавĕсене, автоколоннисене çĕмĕрсе тăкаççĕ, хĕçпăшал склачĕсене сирпĕнтерсе яраççĕ, çар турттаракан поездсене тӳнтереççĕ т. ыт. те. Çакăн пек пĕрлех пирĕн хăюллă партизансем хăйсенчен йышлă тăшман отрячĕсем çине тапăннисем те сахал мар.

Пирĕн партизансем тăшман тылĕнче вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çавтери вăйлăн ĕçлеме пуçланине тата вĕсем фашистсен сехрине хăпартнине немĕç офицерĕсемпе салтакĕсен çырăвĕсем те аван кăтартса параççĕ. Акă мĕн калать немĕç офицерĕ Вольфганс Берг хăйĕн юлташĕ патне çырнă çырура: «Кунти вăрçă вăл—партизанла вăрçă. Пирĕн соединенин виççĕмĕш пайне вĕлерсе пĕтерчĕç. Кунти пысăк та сĕм вăрманлă вырăнсенче кашни минутăрах асăрхаман çĕртен пересснне кĕтсех тăр. Каçхине пĕччен е темиçен вăрмана кĕни—хăвна ху вĕлернипе пĕрех. Вырăссем, паллах, партизанла вăрçă меслечĕпе усă курма шухăшласçĕ, çапăçасса вĕсем пирĕн полевой почтăна тапăнчĕç. Эпĕ ку вăрçă кăçалах пĕтессе шанми пултăм,—мĕншĕн тесен вырăссем ытла та вăйлă тăшмансем». Ку çырăва немĕç офицерĕ отечественнăй вăрçăн малтанхи уйăхĕнчех çырнă. Унтанпа ĕнтĕ пирĕн партизанла движени вунă хут ытла ӳснĕ.

Партизансем тăшман çарĕсене хирĕç тĕрлĕ майсемпе кĕрешеççĕ. Вĕсем хушшинче 1613 çулта тăшман ушкăнне сĕм вăрман чăтлăхне кĕртсе пĕтернĕ Иван Сусанин пек патриотсем те часчасах тĕл пулаççĕ. Пĕр-пĕр «лапкă» колхозник, партизансем пытанса пурăнакан вырăна тупса пама пулса, нимĕç фашисчĕсене шурлăхлă вăрмана илсе кĕрет те вĕсене партизансен хĕçпăшалĕпех пĕтмелле тăвать. М. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăйсен çывăхĕнчех нимĕçсен аэродромĕ пуррине палăртнă. Партизансен разведчикĕсем темиçе кун хушши çак аэродром çинче мĕн чухлĕ самолет тăнине тата вĕсен командин йышне пĕлсе çӳренĕ. Пĕлсе çитнĕ хыççăн, аэродром патне малтан разведчиксем шăвăнса пырса, унти охранăна чĕр сассăр пĕтерсе тăкнă. Вара партизансен хĕçпăшаллă отрячĕ сасартăк пырса çитсе, аэродром çинчи фашистсене 22 çынна пĕтерсе тăкнă тата 12 самолета бензин сапса çунтарса янă.

Белорусси çĕрĕн пĕр районĕнче «Дед» ертсе пыракан партизансен отрячĕ пур. Дед—вăрçăччен ялсовет председателĕ пулнă. Дедăн отрячĕ пысăках та мар, анчах та вăл хăйĕн хăюллă тапăнăвĕсемпе лаврари нимĕç захватчикĕсене хăратса пĕтернĕ.

Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче «Дед» отрячĕ пек хăюллă та маттур отрядсем питех те нумай. Вĕсене вăрçăччен мирлĕ ĕçпе пурăннă çынсемех—ялсовет председателĕ, е райисполком председателĕ, е МТС директорĕ пулнă çынсемех тата ыт. те ертсе пыраççĕ. Ун пек отрядсен ĕçĕсем çинчен пире Совет Информаци Бюровĕ кашни кулленех пĕлтерсе тăрать.

Партизансен отрячĕсене вăй парса тăракансем пур çĕрте те коммунистсемпе комсомолецсем шутланаççĕ. Çапла, юнлă фашизма хирĕç кĕрешес ĕçре, партизансем хушшинче те партипе комсомол членĕсем авангардлă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçăра партизанла кĕрешӳ пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партизансен кĕрешĕвĕ Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу парать, вăл тăшманăн тылне хавшатса ăна пуçех çĕмĕрсе тăкмалли срока çыхăртать. Партипе совет парвительстви партизанла кĕрешĕве пысăкка хаклаççĕ. Нумаях пулмасть чи паллă тата хăюллăн кĕрешекен партизансене правительство наградăларĕ. Вĕсенчен никĕшне — Т. П. Бумажков тата Ф. И. Павловский юлташсене Совет Союз Геройĕн званине панă.

Сталин юлташ: «...Пирĕн çĕршыв çине, ăна чуралантарас шутпа, сĕмĕрленсе кĕнĕ нимĕç оккупанчĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла», — терĕ.

Геройла Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăрса тăшман тылĕнче кĕрешекен паттăр партизансем çак задачăна чыслăн пурнăçа кĕртрĕç.

П. ГРИГОРЬЕВ.

М. М. Литвинов юлташ прессконференцире калани

ВАШИНГТОН, декабрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Совет посольствинче пулса иртнĕ пресс-конференцире Америкăра тухса тăракан хаатсемпе радиостанцисен представителĕсем, çавăн пекех тата Англи, Канада, Латинла Америка тата Китай хаçатĕсен представителĕсем те хутлай пулнă.

Хăйĕн сăмахĕнче М. М. Литвинов юлташ юлашки ултă уйăх хушшинче пулса иртнĕ событисем çинчен кĕскен калаçа панă. Вăл Гитлер вăрă-хурахла, уттавлăн пырса тапăннăн Германи фашизмне вăхăтлăха ăнăçлă ĕçсем тума май панине кăтартса хăварнă. Çак ăнăçлăх, паллах, кĕтмен çĕртен пырса тапăннăн çинче никĕсленсе тăрать. Анчах та Гитлер хăйĕн планне Совет Союзĕн çар вăйăвăчĕпе моральлĕ лару-тăрăвĕ пирки йăнăш шутласа тунă.

— Вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕрех, тепĕр чухне тата дипломатиллĕ калаçусемпе витĕнсе тапăнасси,—тенĕ малалла Литвинов юлташ,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ тĕнĕл держависем пĕтĕм тĕнчери пурнăçа кĕртнĕ çĕнĕ йăла. Çăхнăшкал тактика тапăнаканнине малтанлăха чылаях пысăк ăнăçлăх парать. Çакă мĕне пĕлтернине Америка халăхĕ темиçе кун маларах кăна хăй курса ăнланчĕ.

— Гитлер хăйĕн тискер вăрçă машинине Совет Союзне кирĕç хускатса ячĕ, вăл Совет Союзĕн чылай пысăк пайне тытса илнине пула, Хĕрлĕ Çарăн промышленнăçлă районсенчен тухса каймалла пулчĕ, çав вăхăтрах Гитлер Германи çарĕн çухатăвĕсене Германири, Австрири, Чехословакири, Бельгири, Францири тата хăй оккупациленĕ ытти çĕршывсенчи промышленнăçăн мĕнпур вăй-хăвачĕ пулăшнине тултарса пырать. Германи хăйĕн хăватлă мĕнпур резервĕсемпе тата ресурсĕсемпе хĕснине Хĕрлĕ Çар урăх çĕршывсенчен пулăшу илмесĕрех 5 уйăх çурă хушши чарса тăчĕ. Паллах ĕнтĕ, Европăн пĕр-пĕр районĕнче иккĕмĕш фронт пуçланнишĕн хавасланнă пулăттăмăр, ку фронт Гитлерăн хĕçпăталлă вăйĕсен пĕр пайне хăй еннелле илсе кайнă пулĕччĕ те пире сывлăм çăвăрма кăшт вăхăт панă пулĕччĕ. Ĕпир хамăр çăн союзник Англи умне Европăра çакăн пек фронт тума нихăçан та инеплĕ требовани те лартман, кун пек фронта тумашкăн ĕпир ăна ӳкĕтлемен те, анчах та континент çине килсе кĕме май сукки çинчен, ывăрри çинчен тата вăхăтăрри çинчен Англи правительстви ĕнентерсе каланине шута илеттĕр.

— Хальхи вăрçăшăн айăпли—хăйĕн мĕнпур бандине хавхалантарса пыракан Гитлер пулса тăрать,—тенĕ малалла Литвинов юлташ.—Гитлера пĕтерсе тăксан, вара çав бандăсем пурте пĕтнĕ пулĕччĕç.

Гитлер Хĕвелтухăçĕнче вăрçă ĕçĕсене анлăн туса пырассине чакарма шутлать тесе çӳрекен хыпарсене чăнласах йышăнма юраманни çинчен кăтартса панă малалла Литвинов. Гитлер контролĕнчен килмен обстоятельствăсем çеç унăн активлăхне чакарма пултарраçĕç.

— Совет Союзĕн Верховный Командованийĕ Гитлера кăçал ăшă çĕрте хĕл каçма пама шутламасть. Ĕпир унăн хăрушă машинине ăна тăваканнисене пĕтерсе тăкма шутлатпăр. Ĕпир çапла шутлатпăр: çакна пирĕншĕн е пирĕнсĕр никам та тума пултараймасть, хальхи семантра ĕпир çак тĕлĕшпе хамăран вăй-хăвата кăшт та пулин чакарсан, хамăран пĕрлĕхлĕ ĕçри союзниксене питĕ начар пулăшу панă пулăттăмăр.

— Юлашки темиçе кун хушшинче, — тенĕ Литвинов юлташ,—çапăçу хирĕ мĕнпур континентсене сарăлса пырать. Халĕ ĕнтĕ, политикăллă чĕлхере ача е суккăр тесе ят панисемшĕн те çакă паллă пулмалла: хальхи вăхăтра пулса иртекен ĕçсем пурте хăйсене тĕнĕл держависем тесе калакан, хăйсен умте пур çĕршывсене те çаратас, çав çĕршывсенчи халăхсене чуралантарас задачăна лартакан вăрă-хурахла ушкăнăн вăрттăн ĕçĕсен результачĕсем пулса тăраççĕ. Çак факторан сăн-сăпачĕ Коминтерна кирĕçле пахта тунă чухне палăрчĕ. Халĕ ĕнтĕ хăйсен халăхĕсене чуралантарнă пĕчĕк ушкăна хирĕç пĕтĕм тĕнче çĕкленчĕ.

Хальхи вăхăтра тĕнчен тĕрлĕ пайĕсем пĕр çапăçăвăн аслă хирĕнчи тĕрлĕ секторĕсем пулса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнчери вăрă-хурахсене хирĕç пыракан çак çапăçурăн пысăк йывăрлăх Совет Союзĕ çине, Англи çине тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çине ӳкрĕ.

Ĕпир хамăр Сирĕн аслă çĕршывăрăн союзникĕ пулнишĕн хавхаланатпăр. Эпĕ çакна шанса тăратăп: çак вырăс союзник камăн хăш секторта хăйĕн вăйне ытларах хума кирли тĕлĕпе пĕр-пĕрне ăнланса каласа татăлĕç, çак ĕçре вĕсем кашниех пĕрлĕхлĕ ĕçĕн интересĕсемшĕн тăрашăç. Ĕпир пурте пĕр карап çинчех ларса пыратпăр, çавăнпа та ĕпир е пурăмăр та пĕрле путса вилĕпĕр, е хальхи вăхăтри чи киревсĕр усала, агресси тăватне, пĕтĕм тĕнчери намăссăрлăха, варварствăна пĕтерсе тăкăпăр та çиеле тухăпăр.

Юлашкинчен Литвинов юлташ çапла каланă:

— Эпĕ çакăнта калани ĕçир ыйтусем пама пуçлассăн умсăмахĕ пулать. Анчах ĕçир панă ыйтусенчен пурин çине те ответ паманнипе сире кӳрентерме пултарнăшăн ĕçир мана хăçарасса шанатăп эпĕ. Сирĕнтен нумайĕшĕ мĕн ыйтма хатĕрринче эпĕ ăнланатăп, анчах та, ĕçир хăварах пĕлетĕр ĕнтĕ, пирĕн противниксем эпĕ каланă сăмахсене татах та тинкеререх итлеççĕ.

Пĕр корреспондент сиенчех вара çапла асăрхаттарнă: «посол ĕпир пама хатĕрленсе тăнă ыйту çине ответ паче»—тенĕ. Литвинов юлташ унпа килĕшнĕ. Унтан тĕнчери лару-тăрăвăн тĕрлĕ ыйтăвĕсем çинчен хӳрӳллĕ калаçу пуçланнă. Литвинов юлташ, хăй маларахах асăрхаттарнă пек стратегиллĕ вырăн йышăнса тăракан хăппăр ыйтусем çине ответ памасан, корреспондентсем ответа çине тăрсах ыйтман.

Пресс-конференци çавтери кăмăллă обстановкăра пулса иртнĕ.

Лăпкă океанри вăрçă

Гонконгшăн пыракан хаяр çапăçусем

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Англи командованин Сингапурта калăрнă коммюникинче, Англи войскисем Гонконгшăн çаплах хаяррăн çапăçаççĕ, тенĕ. Çĕнĕ рубежсене куçассине командовани кăтартса панă тăрах тунă. Чакнă чухне пахарах сооруженисене пурне те çĕмĕрсе хăварнă. Гонконг районĕнче Япони войскисемпе Англи войскисем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Филиппинсен районĕнчи сывлăшри вăрçă ĕçĕсем

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Çар министерстви калăрнă коммюникере çапла каланă: Филиппинсен районĕнче противникăн сывлăшри операцийĕсем Лусон утравĕ тĕлĕнче пулса пыраççĕ. Сывлăшри операцисем Лусон утравĕн çурçĕрти, çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи пайĕсенче тата Рингата сывăхĕнче пулса пыраççĕ. Ытти районсенче паллă улшăнусемех пулман.

Япони войскисем Гуам утравне оккупациленĕ

ТОКИО, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Паян пĕлтернĕ официальнăй сведенисем тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Гуам утравĕнчи гарнизонне хирĕç çапăçнă хыççăн Японин войскисемпе тинĕсри вăйăсем Гуам утравне татăклăнах оккупациленĕ.

„Ивнинг стандарт“ Таи позицийĕ çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕш. (ТАСС). «Ивнинг стандарт» хаçатăн Çурçĕр Малайăри специальнăй корреспонденчĕ çапла çырать: халь пĕлнĕ тăрăх, Таи правительстви «нейтралитетăн» тĕтрелĕхĕпе витĕнсе, японецсемпе таччăн сыхăнса ĕçленĕ. Японецсем Сангора аннă хыççăн чи малтанах Сангорти тĕп аэродромран инçех те мар Жигăри вăрттăн аэродрома тытса илнĕ. Çак пысăк аэродромпа йывăр бомбардировщиксем усă кураççĕ. Таири нихăш вырăнта та японецсене хирĕç тăма хăтланса та пăхман.

Диккенс адмиралăн заявленийĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Адмирал Диккенс Атлантика океанĕпе Лăпкă океанри вăрçă ĕçĕсем çинчен радио тăрăх тухса каланă. Вăл çапла каланă: Атлантика океанĕ пирĕн вăрçă ĕçĕсен тĕп вырăнĕ пулса тăрать; çав океанра пирĕн çухатусем сахалланни ĕнтĕ противникшăн, Англия Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пырса çапни пекех, вăйлăн пырса çапни пулать. Суту-илӳ карапĕсене хурапла илсе çӳрес система хăйĕн уссине лайăхрах та лайăхрах кăтартса пырать. 40, 50, 60 тата ытларах та карапсенчен тăракан каравансем нимĕн çухату тумасăрах килсе тăраççĕ. Тепĕр енчен тата тĕнĕл держависен суту-илӳ карапĕсене ытларах та ытларах путарса пыни противник экономика тĕлĕмĕнчен тата вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен пысăк поражени тӳснине кăтартса парать.

«Япони хирĕç пыракан вăрçăра,—тенĕ малалла Диккенс,—тинĕсри вăйăхват ниçăсанхинчен ытларах паха фактор пулса тăрать. Тинĕсри икĕ вăйлă державăн пĕрлештернĕ стратегийĕ ку тарана çитсе пĕр хут çеç мар ĕнтĕ противника çĕнтернĕ. Союзниксем чылаях пысăк çухатусем турĕç пулин те, вĕсем çапах халĕ хисеп тĕлĕшĕнчен противникран вăйлăрах-ха. Нумай пунктсенче вăйлă пулас тесен, пире татах та нумайрах карапсем кирлĕ. Ĕпир тинĕсре хамăр çĕнтерессине шанатпăр-и? тесе ыйтакан çынсене хирĕç пирĕн: паллах, ĕпир çĕнтеретпĕр, тесе ответ памалла»,—тенĕ Диккенс.

Испания Франци чиккине хупнă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Испания хăйĕн Франци енчи чиккине хупнă. Çакăнпа вара вăл американецсене Франциран Португали урлă тухса кайма чарса тăрать.

Англи королĕ Рузвельт патне янă послани

ВАШИНГТОН, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государственнăй департаменчĕ Англи королĕ Рузвельт патне янă послание пичетлесе каларнă. Япония тапăннине сивлесе, король Англи çĕнтерӳ тума татăклăнах шутлани çинчен татах та тепĕр хут калаçа парать. Хăйĕн посланинче король хура та тĕксĕм вăйсене мĕнпур тĕнчипех çĕнтерессине, пусмăрлăхран хăтарнă тĕнчере ирĕклĕх хисепе тухассине кăтартса парать.

Рузвельт çак послани çине панă хăйĕн ответĕнче çакна кăтартса парать: хальхи вăхăтра пирĕн икĕ халăх та хĕçпăшал тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе юлташсем пулаççĕ. Сирĕн халăхăр вăрçăн икĕ çулĕ хушшинче паттăррăн кĕрешни пире хамăрăн кĕрешӳре хавхалантарса пырать.

Çар карапĕсем тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Путнă «Принц Уэлльский» линкорпа «Рипалс» крейсер вырăнне çар карапĕсем тума Эдинбург хулинчи халăх укçа-тенкĕ пухма тытăннă. Тинĕс министерстви Эдинбург хулинчи халăх пухнă укçапа «Принц Уэлльский» класĕнчи линкора тума килĕшнĕ. Халĕ тата çав хулари халăх «Рипалс» крейсер вырăнне те çĕнĕ карап тумашкăн укçа-тенкĕ пухма кăмăл тăвать. Эдинбургра çар карапĕсем тума укçа-тенкĕ пухмалли ĕрне хушшинче 10 миллион стерлинг пухма палăртнă пулсан, чăннипе çав вăхăтра 12.250.000 стерлинг пухнă.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ паян пичетлесе каларнă коммюникере çапла каланă: Англин тĕп вăйĕсем Эль-Газалран кăнтăр еннерехи районран хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвеланăç еннелле тума пуçланă наступление малалла аталантараççĕ. Эль-Газалра противника Çĕнĕ Зеланди войскисем хупăрласа илнĕ те ăна кăнтăр-хĕвеланăç енчен атакăлаççĕ.

Германипе Италин çурçĕр-хĕвеланăç еннелле чакса пыракан пехотипе автотранспортлăн колоннисем çине Англин мобильнăй отрячĕсем тăтăшах пыра-пыра тапăнаççĕ йĕркерен вăлараççĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕнче çак районра противникăн танкĕсене Англин танкĕсем атакăланă.

Ливипе Египет чикки районĕнче Соллумран кăнтăр-хĕвеланăç еннерехире, Кăнтăр Африка войскисем противника çирĕплетнĕ вырăнтан тасатнă та нумай хĕпăшал тытса илнĕ. Ку районри операцисем малалла аталанса пыраççĕ. Англи авиацийĕ Эль-Газалран тата Бир-Хакеймран хĕвеланăç еннелле, çавăн пекех тата Тмимирен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле каякан çулсем тăрăх чакакан противникăн автотранспортлăн пехоти çине питĕ вăйлăн пырса тапăкнă. Сывлăшран атакăлани противникăн материальнăй чăсне тата чĕрĕ вăйне питĕ пысăк сухату кӳнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, декабрĕн 13-мĕшĕнче малалла куçнă. Юлашки сведенисем тăрăх, Çĕнĕ Зеланди чăсĕсем 4 сехет хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн Эль-Газала пĕтĕмĕшпех хупăрласа илнĕ. Тăшман войскисене çакăнта пуçĕпех çапса аркатнă. Тыткăна нумай çын илнĕ. Тăшман, хăйпе пĕрле илсе тухса каймa ĕлкĕреймĕн пирки, çар пурлăхĕсемпе запассен пысăк складĕсене пăрахса хăварнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, декабрĕн 13-мĕшĕнче Бир-Хакеймран çурçĕр-хĕвеланăç енчи Бир-Эль районĕнче кăна 18 оруди тытса илнĕ, 500 çынна тыткăна илнĕ тата Италин темиçе танкне пĕтерсе тăкнă.

Роммель генералăн икĕ бронетанковăй дивизийĕн тата Италин икĕ моторизованнăй дивизийĕн юлашкийĕсем каялла чакаççĕ. Вĕсем халĕ Тобруккран 35 километрта пыраççĕ. Англи чăсĕсем Бенгази патнелле куçаççĕ.

Тăшманăн Соллумпа Барди районĕсенчи чăсĕсем, продовольстви çитмен пирки, парăнма тивет пулĕ, тесе шутлаççĕ.

Авиаци сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 18 самолетне пĕрсе антарнă. Декабрĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Антли самолечĕсем Вăтаçĕр тинĕсре противникăн карапĕсене хирĕç çапăрнă. Çав операцисенче пĕр самолет хăйĕн базине тавăрăнман.

Хĕвелтухăç фронтĕнче Итали генералĕ вилни

ЖЕНЕВА, декабрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Хĕвелтухăç фронтĕнче Итали генералĕ Каролис вилни çинчен Италире официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çак пĕлтерӳ тăрăхах, Каролис Хĕвелтухăç фронтĕнчи çапăçусенче вилнĕ Итали генералĕсенчен улттăмĕш генерал шутланать.

Итали крейсерĕсене путарни

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви паян кăларнă пĕлтерĕвĕнче çакăн пек каланă: декабрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Вăтаçĕр тинĕсĕн центрти пайĕнче патрульре çӳренĕ Англи эсминецĕсем чаплă ĕçсем туни çинчен калакан хыпар килнĕ. Италин пĕр крейсерне путарнă, тепĕр крейсерне хытах сиенленĕ. Кунсăр пуçне тата итальянецсен пĕр миноносецне сиенленĕ, тепĕр торпеднăй катерне путарнă. Пирĕн карапсем пĕр сиен те курман.

Çак операцири çапăçусем çинчен тинĕс министерстви çапла çырса пĕлтерет: çурçĕр иртсен 3 сехет тĕлĕнче Англи эсминецĕсем «Микх», «Линдж», «Маори» тата Голланди эсминецĕ «Исаак Свеср» итальянецсен икĕ крейсерĕпе миноносецне тата торпеднăй катерне хирĕç çапăçма пуçланă. Союзниксен карапĕсем малтан артиллерипен пенĕ, унтан торпедăсемпе атакăланă. Тăшманăн икĕ крейсерĕ те сиенленнĕ. Крейсерсенчен пĕрин çинче вăйлă пушар тухнă, вара вăл нумай тытăнса тăрайман, взрыв пулнипе сирпĕнсе кайнă. Тепĕр крейсерĕ çинче те вăйлă пушар пуçланнă. Миноносец вăйлăн сиенленнĕ, катер шыва путнă.

ЖЕНЕВА, декабрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Итальянецсен официальнăй сводки пĕлтернĕ тăрăх, Вăтаçĕр тинĕсĕн вăтаçĕр пайĕнче пулса иртнĕ çапăçура Италин икĕ çăмăл крейсерне путарнă.

Германия Румыни çарĕсене фронта яма ыйтать

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 14-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Гитлерăн Румынирен татах 6 дивизи Хĕвелтухăç фронтне яма ыйтакан требованине Антонескуна памашкăн Браухич Бухареста тухса кайнă.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Кăнтăр Китайăн Кантонран тĕвелтухăç еннерехи районĕнче вăрçă ĕçĕсем малаллах пыраççĕ. Китай войскисем Коулунски çурутравра Гонконга хирĕç çапăçакаç Япони войскисен тылĕнче хăйсен операцийĕсене активлăн туса пыраççĕ. Китайăн войскисем час-часах Кантон-Коулунски чугунсул çине пыра-пыра тапăнаççĕ. Çак операцисем японецсен тылĕнче хăрушлăх туса хурса вĕсен положенине чылаях йывăрлатаççĕ. Дзяньси провинцинче çапăçусем малтанхи пекех Няньшань хулинчен хĕвеланăç еннерех пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çара пулăшасси вăйлатсах пырать

Çĕрпӳ районĕнчи «Пионер» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйлатсах пыраççĕ. Колхоз тата колхозниксем хăйсен государство умĕнчи мĕнпур обязательствисене ноябрь уйăхĕнчех тултарчĕç. Кунсăр пуçне оборона фондне 300 пăт тырă, пĕр лаша, пĕр ĕне, 500 литр сĕт панă, Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем тума тир, çăм, алшишсемпе носкисем т. ыт. те панă. Паттăр Хĕрлĕ Çара чĕререн юратса тăванла пулăшу парас ĕçе колхозниксемпе колхозницăсем активлăн хутшăнаççĕ.

Сталин юлташ ĕççыннисем, колхозсем тата колхозницăсем умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн фронтпа çĕршыва валли тырпул, ашкакай тата промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăмалла.

«Пионер» колхоз членĕсем Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн Хĕрлĕ Çара пулăшма колхозран пĕр ĕне, пĕр сысна, 300 литр сĕт тата колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хуçалăхĕсенчен 30 пуç сурăх, 6 сысна, 20 килограмм çу, 30 чăх, 300 литр сĕт, 500 çăмарта пама йышăннă. Я. Степанов, Я. Герасимов, Н. Григорьев, Данилова, Илларионова, Ильин, Окунев юлташсем пĕрер сурăх, Фадеевпа Филиппов колхозниксем пĕр сысна, П. Ефимов колхозник 3 пăт çĕрулми, пĕр килограмм çу, 25 литр сĕт, 30 çăмарта тата пĕр автан параççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Кашни киле пĕр хаçат

КАЛИНИНО. Сăкăтри почта агентстви хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетнĕ. Письмоносецсем хаçат-журналсене ытларах сарассишĕн социализмлă ăмăртăва тухнă. Кушар Юнтапари Каганович ячĕпе тăракан колхозри письмоносец тăрăшса ĕçлет. Вăл декабрь уйăхĕшĕн кашни киле пĕр экземпляр хаçат-журнал çырăнтарнă. «Коммунизм ялавĕ» райхаçата 71 экземпляр сарнă. Çăвăн пекех «Чăваш Коммуни» хаçата 25 экземпляр, «Красная Чувашия» хаçата 18 экземпляр сарнă. Çакăнпа пĕрлех письмоносец Н. Антонов хаçатсене тата çырусене те вăхăтра çитерсе парать, хаçат вулама пĕлмен хĕрарăмсене Совет Информбюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата ытти сене те вуласа ăнлантарса парать.

Г. МАТВЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли — ăшă тумтирсем

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра ĕçлекенсем сентябрь уйăхĕнче питех те паха пуçару турĕç. Вĕсен пуçарăвĕпе Вăрнар районĕнче те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç анлăн сарăлчĕ. Ку пуçарăва чи малтан Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем йышăнса илчĕç. Вĕсем, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра ĕçлекенсен пуçарăвне пĕр кăмăлпа ырласа, хамăр республикăри мĕнпур колхозсене чĕнсе çыру çырчĕç, унта Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе колхозниксене активлăн хутшăнма чĕнчĕç. Паянхи кун тĕлне Кольцовка колхозĕнче 11 кĕрĕк пиншак, 94 мăшăр перчатка, 75 мăшăр çăм чăлха, 21 мăшăр çăм тăла, 40 мăшăр пир тăла, 19 мăшăр çăматă, 227 килограмм çăм, 98 тир, 57 мăшăр кĕпе-йĕм, 3 кĕске пиншак, 38 алшăлли, 13 простыня пухнă.

Çакăн пекех, Авруй, Зеленовка колхозĕсенче те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Авруй колхозăн членĕсем кашниех икшер е виçшер ăшă япала панă. Çак колхозра пĕтĕмпе 17 кĕрĕк пиншак, 8 мăшăр перчатка, 19 мăшăр чăлха, 3 мăшăр çăматă, 14 мăшăр пир тăла тата ытти те нумай пухнă. Асăннă колхозсенче боецсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕппе колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулăх ĕçе аван туса пыраççĕ.

Анчах, калас пулать, хăппĕр колхозсен, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ. «Трудовик», «Заря», «Красная Чувашия» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче ку ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Паянхи кун тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли районĕпе 173 кĕрĕк пиншак, 269 мăшăр çăматă, 41 мăшăр алшиш, 456 мăшăр перчатка, 47 мăшăр чăлха, 684 мăшăр пир тата çăм тăласем, 199 мулаххай, 72 фуфайка, 161 минтер пичĕ, 20 простыня тата ытти те пухăннă.

В. МАКСИМОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатсах пыраççĕ. Декабрĕн 10-мĕш тĕлне районра пурĕ 1740 килограмм çăм пухнă, 630 мăшăр çăматă хатĕрленĕ. Вĕсенчен 553 мăшăрне фронт валли янă та ĕнтĕ.

Кунсăр пуçне 2012 тир пухса тума, 1272 кĕрĕк пиншаксем çĕлеме панă. 176 пиншак çĕленĕ те ĕнтĕ. Колхозниксем 6 кĕрĕк пиншак панă. Пухăннă кĕрĕк пиншаксенчен 151 штука фронта янă.

Çăвăн пекех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 10 кĕрĕк жилет, 429 мăшăр çăм чăлха, 92 мăшăр тиртен çĕленĕ ăшă алсасем, 652 мăшăр çăмран сыхнă алшишсемпе перчаткăсем, 54 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем, 476 алшăлли, 51 минтер пичĕ тата ытти япаласем те чылай пухнă.

М. ФЕДОТОВ.

Боецсене—парнесем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çатракассинчи вăтам шкулра вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче вĕсем 176 штука енчĕк çĕлесе фронта ăсатрĕç. Унсăр пуçне боецсене валли 985 штука конверт ячĕç, кашни конверт ăшне çырмалли хут чикнĕ, саламсем çырнă.

Çак кунсенче вĕренекенсем 10 килограмм шăлан çырли типĕтсе пачĕç.

В. ЮМАНКА.

ТĂВАН ÇĔРШЫВ ОБОРОНИН ФОНДНЕ

КУКЕÇ. Иккассинчи «1-ое мая» колхози колхозницăсемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çăрăн паттăр воинĕсем Мускав сывăхĕнче Гитлерăн суйласа пухнă чи лайăх дивизийĕсене çапса аркатса хăвалама пуçлани çинчен калакан хыпара чĕререн савăнса кĕтсе илчĕç. Паттăр Хĕрлĕ Çăрăн мухтавлă боецĕсемпе командирĕсене, Хĕрлĕ Çăрăн ăслă руководителĕсене чĕререн тав туса, хăйсен мĕнпур вăйне тăван çĕршыв оборонине тĕреклетнĕ çĕре пама тупа тăваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çĕршыв оборонин фондне иртнĕ кунсенче 24 центнер тырă, икĕ вăкăр, 14 килограмм çу, 1000 литр сĕт тата 250 центнер çĕрулми панă. Халăхсен ирсĕр тăшманĕсене—нимĕçсен фашистла юнлă бандисене паттăр çапăçура çĕмĕркен Хĕрлĕ Çăрăн боецĕсемпе командирĕсене ырă сунса, колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне татах тепĕр 200 центнер тырă, 12 центнер аш-какай хыврĕç.

* * *

СĔНТĔР. («Чăваш Коммуни» корр. Телефонпа). Сталин юлташ пирĕн колхозниксене фронта пулăшассине татах та вăйлатма чĕнсе каларĕ. Çулпуçăн чĕнĕвне районри нумай колхозсем чысăлăн лурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татнипе пĕрлех çĕршыв оборонин фондне тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата укçа-тенкĕ хываççĕ.

Муркаш ялсоветне кĕркен «Авангард» колхоз оборона фондне 48 центнер сĕлĕ, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 15 центнер тĕштырă, Сталин ячĕпе тăракан колхоз пĕр ĕне, 200 литр сĕт панă. Кунсăр пуçне колхозниксем кашни уйăхрах пĕр ĕçкунĕ çине тивекен тупăша тата заем облигацийĕсене оборона фондне параççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ялсоветĕпе пурĕ заем облигацийĕсене 20 пин тенкĕлĕх панă.

— Пирĕн колхозниксем,—тесе каласа парать Муркаш ялсовет председателĕ Скворцов юлташ,—тăван çĕршыв оборонин вăй-хăватне кунран-кун вăйлатса пыма хатĕр тăраççĕ.

Çатракасси ялсоветне кĕркен колхозсем те çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Нумаях пулмасть «Малалла» колхоз оборона фондне 25 центнер, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 12 центнер тĕштырă панă.

Пашалукасси ялсоветĕнчи «Красный Октябрь», «1-ое Мая» колхозсем оборона фондне 20 килограмм çу, 65 килограмм аш-какай, 200 тенкĕ укçа тата заем облигацийĕсене 8.640 тенкĕлĕх пачĕç.

* * *

ШАХАСАН. Оборона фончĕ куллен кунах ӳссе пырать. НКВД-ăн районри отделенийĕнче ĕçлекенсем оборона фондне кашни уйăхрах икĕ кунхи ĕçукçине парса тăраççĕ. Кунсăр пуçне оборона фондне 11365 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Уйрăмăн илсен, оборона фондне Рожаев юлташ 5720 тенкĕлĕх, Васьков юлташ 1075 тенкĕлĕх, Новиков юлташ 1045 тенкĕлĕх, Федоров юлташ 1095 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе япаласем хатĕрлесе парас тĕлĕшпе те кунта ĕç аван пырать. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли кашниех виçшер, тăваттăшар япала панă.

В. Я.

Фронта яма ыйтаççĕ

КУКЕÇ. Отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенче район центрĕнчи комсомолкăсемпе çамрăк хĕрачасем медсестрасен курсне организацилесе, унта вĕренме тытăнчĕç. Вĕсем производствăран уйăрăлмасăр, кашни пушă сехетпе туллин усă курса, курсра тăрăшса вĕренсе пычĕç. Декабрĕн 9-мĕшĕнче 15 хĕрача курсран вĕренсе тухрĕç.

Курсран «отлично» тата «хорошо» палăсемпе вĕренсе тухнă комсомолкăсем Васильева тата Бурмистрова юлташсем райвоенкомата панă хăйсен заявленийĕсенче çапла çыраççĕ:

«Ĕпир производствăран уйăрăлмасăр медсестрасен курсĕнчен вĕренсе тухрăмăр, фронта юрăхлă çынсем пулма тăрăшрăмăр. Эпир, Совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕ çамрăксем, отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра лăпкăн лармa пултараймастпăр. Пире хăвăртрах фронта яма ыйтатпăр».

Курсран вĕренсе тухнă ытти хĕрачасем те хăйсене хăвăртрах фронта яма ыйтаççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Йĕлтĕрçĕсен малтанхи тренировки

Декабрĕн 11-мĕшĕнче, канмалли кун, Шупашкарти йĕлтĕрçĕсен малтанхи тренировки пулса иртрĕ. 10 сехет тĕлне йĕлтĕрçĕсем пĕрерĕн, икшерĕн, ушкăнпа «Спартак» обществин йĕлтĕр бази умне пуçтарăнчĕç. Унтан 450 йĕлтĕрçĕ хула тулашне тренировкăна тухса кайрĕç. Тренировкăна общественнăй инструкторсем иртттерчĕç. Çав кун, хулари çамрăксемпе пĕрле, всевобучăра вĕренекенсем те йĕлтĕрçĕ тренировкăра пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА „ГЛАВКИНОПРОКАТ“
получила и выпускает на экраны Республики
новый звуковой цветной художественный фильм
„КОНЕК - ГОРБУНОК“
Сценарий — В. ШВЕЙЦЕРА
Режиссер — Орденоносец Александр Ромм.
В РОЛЯХ:
Иванушка — арт. П. АЛЕЙНИКОВ.
Домнушка — засл. арт. РСФСР О. И. ПЫЖЕВА.
Чихирь — арт. Г. МИЛЛЯР.
С 18 декабря фильм демонстрируется в Чебоксарском кинотеатре

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—39, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7441

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф. б. 58. 84 п. л.